www.tavanen.ru

Таван Ен

плюс Причебоксарье

№39 • (10595-10596) • ОКТЯБРЁН 6-МЁШЁ • 2017 • ЭРНЕКУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хакĕ ирĕклĕ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать

Тивĕçлĕ хак

Ăшă сирĕн киле çитрĕ-и?
КОММУНАЛЛĂ ХУÇАЛĂХ → 3

«Пир сумка çĕлесе памастăп...»
ШКУЛ САККИ → 4

Казахсене вырăсла вĕрентнĕ
УЯВ → 7

• КАЛЕНДАРЬТИ КУН



РОСГОССТРАХ яланах юнашар

Страховщиксем паян професси уявне паллă тăваççĕ

Ыранхи куна шанса паян лăпкă пурăнма май пур-и? «Пур», – шантарсах хуравлать страховани рынокĕнче граждансене ĕмĕре яхăн пулăшупа тивĕçтерекен «Росгосстрах» страхлакан компанин Кӳкеçри уйрăмĕн пуçлăхĕ Альбина ИВАНОВА. Мĕншĕн клиентсем ăна суйлаççĕ, мĕншĕн пенсие упрама унăн банкне шанаççĕ, юлашки çулсенчи ӳсĕмсем, вырăнти бюджета килекен налог тӳпи – çакăн пирки уяв умĕн районăн «тĕп страховщикĕпе» калаçатпăр.

→10

Парне валеçме вăхăт çитет!

54820

Юратнă хаçата 2018 çулăн пĕрремĕш çур çулĕнче илсе тăма çырăнтару тапхăрĕ пуçланчĕ. Харсăр вулакансем лотерейăна хутшăнма редакцие квитанцисемпе килме пуçларĕç те ĕнтĕ. Вĕсене электрон почтăпа та ярса пама юрать: tavan-en21@yandex.ru. Парнесене редакци хатĕрлеме пуçланă. Ыттисем çул пĕр машина вутă, телевизор, мультиварка, сысна выляттарнă пулсан ку хутĕнче

ТАКА ХУÇИНЕ ПАЛĂРТАТПĂР!

2018/ I çур çуллăх çырăнтару хакĕсем

ПОЧТА УЙРĂМĔСЕНЧЕ
Республикăри пур район-та та çырăнтараççĕ
377 82 пус тенкĕ

АЛЬТЕРНАТИВА ÇЫРĂНТАРĂВĔ
Редакцире илсе тăмалла
ЭЛЕКТРОНЛĂ ÇЫРĂНТАРУ
260 тенкĕ

ИШЛЕЙ РАЙПОВĔН ЛАВККИСЕНЧЕ
Шупашкар районĕнче вырнаçнă Ишлей райповĕн лавккисенче çырăнмалла
«ЧĂВАШПИЧЕТ» КИОСКĔСЕНЧЕ
300 тенкĕ

Борис ЧИНДЫКОВ,
2009-2010 çулсенче «Тăван Ен» хаçатăн тĕп редакторĕнче ĕçленĕ

2017 çулхи октябрĕн 5-15-мĕшĕсенче кăна Раççей почтин уйрăмĕсенче «Тăван Ен» хаçатăн çур çуллăх хакĕ 330 тенкĕ те 48 пус! Васка, тăванăм, урăх кун пек йӳнĕ хак пулмĕ!

• ÇĔРШЫВРА

Республика шкулĕсенче вĕренекенсен сывлăхĕсене сăнаса тăма май паракан тытăма туянма Чăваш Ене федераци бюджетĕнчен 13,9 млн тенкĕ çитĕ. Субсидие пурĕ регионти 19 субъекта валли уйăраççĕ – пĕтĕмпе 270 млн тенкĕ.

Ку укçа-тенке сывлăх енчен чăрмав пур ачасен сывлăхне сăнаса тăма май паракан программăллă, комплекслă оборудование туянма та усă курĕç, çав шутра медицина тĕрĕслевĕсем ирттерме те. Республикăра асăннă проекта 15 вĕрентӳ учрежденийĕ хутшăнать. Çав шутра 14-шĕ – сывлăх енчен хавшак ачасене пĕлӳ паракан вĕрентӳ организацийĕсем.

• РЕСПУБЛИКĂРА

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев 2018 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче Республика кунне ирттересси çинчен калакан Указа алă пуснă.

Килес çул республикăн чи пĕлтерĕшлĕ уявне халлланă тĕп мероприятисем Шупашкар хулинче тата муниципалитетсемпе хула округĕсен хушшинче хăйĕн территорийĕнче Республика кунне халлланă мероприятисене ирттерме ирĕк çĕнсе илнĕ Красноармейски районĕнче иртĕç. Муниципалитетшăн конкурс çĕнтерӳçи ятне тивĕçни вăл – социаллă пурнăçĕпе экономикине тата инвестици илĕртӳлĕхне малалла аталантармалли хушма хавхалану. Уява хатĕрленсе ирттерме, обществăлла инфраструктурăна аталантарма Красноармейски районне Чăваш Республикин Грантне уйăрĕç. Çак тĕллевпе Чăваш Республикин 2018 çулхи бюджет проектĕнче 10 млн тенкĕ пăхса хунă.

Кашни çулах Республика кунне Раççей регионĕсенчен тата ют çĕршывсенчен пин-пин хăна килет. Çак кун тĕрлĕ культура мероприятийĕ иртет: Пĕтĕм Раççейри «Раççей çăлкуçĕсем» халăх пултарулăхĕн фестивалĕ, ал ĕç ăстисен конкурсĕ, Пĕтĕм Чăвашсен «Акатуй». Шупашкарти экономика форумĕнче, Регионсен хушшинчи «Регионсем – чикĕсĕр хутшăнусем» куравра ĕçлĕ тĕл пулусемпе калаçусем иртеççĕ.

Тав сăмахĕ

«Тăван Ен» хаçатăн пĕрремĕш номерĕ кун çути курнăранпа 85 çул çитнине халлланă савăнăçлă уява йĕркелесе ирттерме пулăшнăшăн хамăрăн шанчăклă юлташсене, «Шалеевские Ишлейские колбасы» лавкка директорне Ольга Владимировна **ШАЛЕЕВĂНА,** «Чебоксарскагропромтехсервис» ОАО ПФ пуçлăхне Александр Вениаминович **БОРОДАВИНА,** «Атлашевский» СХК ертӳçине Сергей Алексеевич **АНУЧИНА** тата, паллах, Чăвашпотребсоюзăн Ишлей РайПОвĕн директорне Татьяна Евгеньевна **ПАВЛОВĂНА**, çавăн пекех вăхăт тупса пире саламлама килнĕ районти предприяти-организаци, федераци тытăмĕнчи территорири органсен ертӳçисене пурне те чĕререн тав тăватпăр.

Эсир юнашарри пирĕншĕн яланах пĕлтерĕшлĕ!

«ТĂВАН ЕН» ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Сергей НЕЯСКИН,
Раççей ШЁМ Чăваш Ен министрĕ:

– Чăваш Республикинчи ДНК-лаборатори туса хума пĕтĕмпе 50 млн тенкĕ тăкакларăмăр. Унччен тĕпчев материалĕсене Тутарстанри ДНК-лаборатори ярса парса вăхăта нумай çухататтăмăр, тăкаксем те пысăкчĕ. Халĕ вара преступленисене васкавлăрах уçса пама шанăç çуралчĕ.

КĂÇАЛХИ 9 УЙĂХРА ВАТĂСЕМПЕ СУСĂРСЕНЕ КИЛĔСЕНЧЕ 36370 ХУТЧЕН СОЦИАЛЛĂ ПУЛĂШУ КŸНĔ. Консультаци пулăшăвĕн тата васкавлă пулăшу уйрăмĕсенче 6954 ватăпа инвалидăн 14400 ытла тĕрлĕ енлĕ ыйтăвне татса панă. 696 ветеранпа 694 пĕччен пурăнакан ватăн пурăнмалли условийĕсене тĕпчесе пĕлнĕ. 9 уйăхра районти халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центрăн 4 уйрăмĕнче 61 çынна стационар пулăшăвĕ кŸнĕ – çакăн пек кăтартусемпе паллаштарнă райадминистрацире тунтикун иртнĕ планеркăра Шупашкар районĕнчи халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центр директорĕ Любовь Ананьева.

Районта ватăсемпе сусăрсене вăхăтлăх пурăнма май паракан 4 ваттисен çуртĕнчен пĕри кăна, Кăрмăшри, пурăнма хăрушлăхсăр пулни палла. Çакна «2013-2018 çулсенче Чăваш Республикинче халăха социаллă пулăшу кŸрес ĕçĕн пахалăхне тата тухăçлăхне ŸстересÑи» программăн «çул-йĕр картти» кăтартса панă. Асăннă документпа, ваттисене пурăнмалли çуртăн çулăма хирĕç 3-мĕш степеньрен кая мар çирĕплĕх пулмалла. Шорккари, Хыркассинчи тата Янăшри ваттисен çурчĕсем йывăç пĕренерен, документ ыйтнине тивĕçтермеççĕ. Кăрмăшри тата Кŷкеçри ваттисен çурчĕсен 2-мĕш степеньлĕ çирĕплĕх – палăртнă Любовь Ананьева.

Янăшри, Хыркассинчи тата Шорккари ваттисен çурчĕсенче пурăннă 36 çынна Кăрмăшри тата Кŷкеçри ваттисен çурчĕсене куçарнă. ■

УЯВ САЛАМĔСЕМ

Михаил ИГНАТЬЕВ,
Чăваш Республикин Пуçлăхĕ

Хисеплĕ педагогсем тата пĕлŷ отраслĕн ветеранĕсем!

Сире професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Çак кун эпир юратнă учительсене ăшшăн тата чунтан тав туса аса илетпĕр. Пысăк ăсталăхлă вĕрентекенĕмĕрсем хамăра ăс панисене эпир пурнăç тăршшĕпех асра упратпăр.

Чăваш Ен вĕрентŷ тытăмĕнче 22 пин ытла педагог тăрăшать. Хăйсен пархатарлă тивĕçне вĕсем куллен-кун чыслăн тата чунне парса пурнăçлаççĕ.

Республика хăйĕн пултаруллă вĕрентекенĕсемпе чăннипех мухтанма пултарать. Вĕсем пĕлŷ паракан ачасем Пĕтĕм Раççейри конкурссемпе олимпиадăсенче çĕнтереççĕ, экзаменсене ăнăçлă тытаççĕ тата çĕршыври малта пыракан аслă шкулсене вĕренме кĕреççĕ. Педагогсен пĕрлĕхĕн ĕç тухăçлăхне Чăваш Ен шкулĕсем çулсерен Раççейри чи лайăх шкулсен йышне кĕни те уçăмлăн çирĕплетет.

Хаклă вĕрентекенсем, сире профессие парăннăшăн, тарават чунлă, çирĕп те чăтăмлă пулнăшăн тата ачасене чунчĕререн юратнăшăн тав тăватăп.

Сирĕн çутĕç анинчи ырми-канми ĕçĕр тата пурнăçри яваплăхлă хастарлăхăр – килес ăрусен çитĕнĕвĕн, эппин, республикăмăрпа çĕршывăмăрăн тивĕçлĕ пуласлăхĕн те, шанчăклă никĕсĕ.

Сире çирĕп сывлăх, иксĕлми хавхалану, тулли телей, çемье ырлăхне, тăнăçлăх тата мĕн пур ыррине сунатăп!

Агропромышленноç комплексĕн хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!

Сире професси уявĕпе – Ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Эсир пурсăмăра та тăрантаракан çĕр-шывăмăра тивĕçлипе пăхса тĕрĕс-тĕкел упрассишĕн пĕтĕм вăйăра тата чун хавалне шеллемесĕр тăрăшатăр, ырмиканми ĕçĕрпе экономикăна аталантарма çирĕп никĕс хыватăр, халăха лайăх пахалăхлă тата экологи тĕлĕшĕнчен таса шутланакан продукципе тивĕçтеретĕр.

Хальхи вăхăтри технологисене алла илни, ял хуçалăхне ăнăçлăн çĕнетсе пыни ĕç ŷсĕмлĕхне пысăклатма, ял хуçалăх производствин тухăçлăхне тата продукци пахалăхне ŷстерме пулăшаççĕ. Кăçал отрасль ĕçченĕсен тăрăшулăхне пула тĕш тырăсемпе пăрçа йышши культурăсен рекордлă тухăçне пухса кĕртнĕ.

Чăваш Енре агропромышленноç комплексĕн ĕçченĕсем валли хăтлă майсем туса парасси çине тимлĕн пăхатпăр. Ял территорийĕсене çирĕппĕн аталантарма, производство культурине ŷстерме, ялăн общество инфратытăмне лайăхлатма тата ялта пурăнакансене социаллă пулăшу пама çулсерен чылай пысăк укçа-тенкĕ уйăратпăр.

Отрасль ветеранĕсемпе хастар ĕçченĕсене хăйсем суйласа илнĕ хреснен ĕçне юратнăшăн, ĕçри ăнăçусемпе çитĕнŷсемшĕн чун-чĕререн тав тăватăп. Сире хисеплесе чунтан тав тунине туллин палăртма, пурсăра та çирĕп сывлăх, ырлăх тата вăрăм ĕмĕр сунма ирĕк парсамăр!

Сăвăм выльăх апатĕнчен те килет

Хуçалăхсем силос хываççĕ

Хĕрŷ ĕççи вĕçленсе пырать

В. Шумилова сăн ӳкерĕвĕсем

• ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

Вырма ĕçĕсене вĕçленĕ, кĕрхисене акса пĕтернĕ пулсан та, çĕр ĕçченĕсемшĕн яваплă тапхăр вĕçленмен-ха. Куккурус ŷстерекенсем силос хывма тытăнчĕç. «Чурачикское» ОАО-ри ĕçсемпе паллашма райадминистрацин ял хуçалăх тата экологи уйрăмĕн пуçлăхĕ Сергей Ванюшкин та çула тухрĕ.

«Ĕне сĕчĕ – апачĕ çинче» текен каларăш чăн пулнине ял хуçалăхĕнче вăй хуракансем кăна мар, ялта çитĕнсе ŷснĕ кашни çын пĕлет. Ял хуçалăх предприятийĕсен ертŷçисем те куккурус – пахалăхлă, тутлăхлă выльăх апачĕ пулнине ăнланаççĕ, çак культурăна валли пысăкрах та пысăкрах лаптăксем уйăраççĕ. «Чурачикское» ОАО-ра тата «Прогресс» ЗАО-ра пĕтĕмĕшле 700 га яхăн асăннă культурăна çитĕнтернĕ. Малтан асăннă хуçалăхра кăçал ĕнесен шутне ŷстерчĕç, кĕтĕве çĕнетме Киров облаçĕнчен 56 тынашка туянса килчĕç. Хура-шурă ăратлăскерсем кĕлетке енчен те пысăк, вăтамран 700 кг ытла туртаççĕ, 800 кг-ран иртекеннисем те пур вĕсен йышĕнче. Выльăх шучĕ ŷссе пынăран кăçал хуçалăхра çĕнĕ вите хута ячĕç, унта тынашкасене куçарма палăртаççĕ. Çăтă тăракан ĕнесене те ирĕкрех пулĕ.

Иртнĕ çул хуçалăхра куккуруса вăрлăхлăх та хатĕрленĕ. Кăçал асăннă культура пиçсе çитейĕ-ши – кун пирки калама йывăртарах, тырăллă культурăсем палăртнинчен 3 эрне каярах пиçсе çитрĕç, куккурус та çав вăхăтах кая юлчĕ. «Силоса пĕр траншея хывсан кăшт тăхтасшăн. Куккурус йĕпе, алăпа тытса чăмăртасан шыв тухать», – палăртать «Чурачикское» ОАО директорĕн çумĕ Николай Богданов. Хуçалăхра куккурусăн тĕрлĕ сортне ŷстереççĕ, хамăр çĕршывра туса кăларнисене те, чикĕ леш енчен илсе килнисене те. «Обский 140», «Корифей», «Фалькон» – ячĕсем тĕрлĕрен. Специалистсем асăннă культурăра крахмал виçи пысăк пулнине палăртаççĕ, уйрăмах куккурус пуçĕсемпе çулçисем паха. Пысăк пахалăхлă силос ĕнесем сĕт антарасси çине те витĕм кŷрет. Çанталăк ăшă, типĕ тăрсан куккурус вăрлăхне лапчăтса упрама хурас тĕллевлĕ хуçалăхра. Маларах хуçалăхсенче 400 га куккуруса силос тума, 300 га тырăлăх вырма палăртнă. Çанталăк тĕлĕнтермĕшĕсене пула малтан палăртни пурнăçа кĕмесен те пултарать. «Пĕр 100-200 га лаптăк çинче куккурус вăррисене лапчăтса упрама хурасшăн», – шантарсах калама тăхтать Николай Богданов.

3-4 кунра Кĕçĕн Турхан çывăхĕнчи траншейăна силоспа тултарас тĕллевлĕ çĕр ĕçченĕсем. Уй-хирте ĕçлекен хăватлă комбайн хыççăн 40 см вăрăмĕш куккурус тунисем кăна юлаççĕ, вĕтетнĕ хутăша

САМАХ МАЙ

«Атлашевский» СХК ЗАО-ра та куккурусран силос хываççĕ, сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне 60 т.

Евгений Уривалов комбайнер тŷрех çулса, тиесе пырать. Пĕр трактор тулнă çĕре тепри килсех тăрать, ĕç чарăнса лармасăр кал-кал пырать. 6-7 трактор вĕтетнĕ куккуруса траншейăна турттарать. Кĕçĕн Турхан çывăхĕнче силос траншейинче те ĕçсем хĕрŷ. Трактор-машинăсем килсе тăкнă силоса 2 трактор таптаса путараççĕ.

Паянхи куна куккурус ŷстерекен хуçалăхсенчен «Чурачикское» ОАО-па «Прогресс» ЗАО-сăр пуçне «Атлашевский» СХК ЗАО ĕçченĕсем те силос хатĕрлеме тытăннă.

ДЕОМИД ВАСИЛЬЕВ

«Шурă вилĕме» çĕнтереет-и ача?

• ХĂРУШСĂРЛĂХ

Çул çитменнисем наркотиклĕ хутăшсем енне туртăнни паян çивĕч ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Интернетра наркотиклĕ япаласем çинчен тулли информаци тупма пулать. Çапла вара çул çитменнисен вĕсем нимле хăрушлăх та кăларса тăратмаççĕ текен ăнлав йĕркеленет. Медицина ĕçченĕсем тата психологсем çăмăл наркотиксем çуккине тахçанах çирĕплетни вĕсемшĕн ĕнентерŷллĕ аргумент мар тейĕн.

Вĕренŷре ĕлкĕрейменни хăрушлăха систерет

«Шурă вилĕм» çул çитменнисен йĕркеленсе, çирĕпленсе çитмен организмне кĕске вăхăтрах тĕп тума пултарать. Çавăнпа ачасем çак наркăмăш серепине ан лекчĕр тесен профилактика ĕçĕсене вăхăтра иртермелле. Социаллă хăрушлăхлă ушкăна кĕрекеннисене вара уйрăмах тимлĕх кирлĕ. Психикăна пăсакан хутăшсене усă куракан ашшĕ-амăшĕн ачисен, тĕрмерен ларса тухнисен, ашшĕ-амăш хŷтлĕхĕсĕр юлнă тата тăлăх ачасен, сахал тупăшлă, йышлă, тулли мар çемьере пурăнакансен, урамра тĕлсĕр-пĕлсĕр çапкаланса çŷрекен çул çитмен ачасен наркотик серепине лекес хăрушлăх уйрăмах пысăк.

Çул çитменнисем наркотиксемпе туслашассине маларах пŷлес тесен вĕрентŷ учрежденийĕсенче хăрушлăх ушкăнне кĕрекен ачасене педагогсен тŷрех асăрхама хăнăхса çитмелле. Кăçал Шупашкар райадминистрацийĕн вĕрентŷ управленийĕ республикăри хула тулашĕнчи сывлăха çирĕплетмелли лагерьсенче канмашкăн 363 путевка уйăрнă. Вĕсенче хăрушлăх ушкăнне кĕрекен ачасем те каннă. Çакăн çинчен иртнĕ эрнекун райадминистрацире наркотиксене хирĕç кĕрешекен комиссин черетлĕ ларăвĕнче вĕрентŷ управленийĕн методисчĕ Валентина Александрова пĕлтерчĕ. 2017 çулхи çуллахи тапхăрта спортпа сывлăх канăвĕпе 21 шкул çумĕнчи лагерьте 1431 вĕренекене тивĕçтернĕ. Вĕсенчен 6-шĕ çул çитменнисемпе ĕçлекен комисси учетĕнче тăраççĕ, çул çитменнисемпе ĕçлекен уйрăмра – 16.

Палаткăллă лагерьсенче 340 ача вăхăта усăпа ирттернĕ. Класс ертŷçисем ачасене Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Улатăр, Çĕрпŷ хулисене, Атăл леш енне, Кĕçĕн Çавал, Сăр, Ункă, Йăршу юхан шывĕсем хĕррине походсене илсе тухнă. «Кĕркуннехи каникулта райадминистрацин вĕрентŷ управленийĕ 20 вĕренекене «Жемчужина Чувашии» лагере канма ярасшăн», – пĕлтерчĕ Валентина Николаевна.

Кŷкеç лицейĕн администраци-

УЯВ САЛАМЁСЕМ

Альбина ЕГОРОВА,
Чăваш Республикин Патшалăх Канашён председателён çумё – бюджет, финанс тата налог комитечён председателё

Хиселлё вёрентекенсем, педагогика ёçён ветеранёсем!

Сире пётём тёнчери Учитель кунёпе чун-чёререн саламлатăп.

Учитель – вёрентӳ тытăмён тёп шăнăрё, çитёнекен ăрăвăн пуласлăхё унран нумай килет. Паянхи вёрентекенён тарăн пёлӳ кăна памалла мар, унăн ачара вёрентес туртăма аталантармалла та, виççе хакласа тёрёс йышăнусем тума хăнăхтармалла.

Сирён тăрăшулăх, паха опыт хисепе тивёç. Çак кун ёçёршён, тăрăшулăхăршăн чунтан тухакан тав сăмахёсене йышăнса илсемёр. Ырлăх-сывлăх, çемьере телей, çăл куç пек тапса тăракан пултарулăх, тăрăшуллă вёренекенсем сунатăп.

Ⓟ 10-15

Районти ял хуçалăх, агропромышленноç комплексён хиселлё ёçченёсем!

Мён авалтанах çёр тăрантаракан шутланнă, ăна асăрханса ăшшăн пăхнă, ун çинче ёçлекенсем вара яланах хисепре пулнă. Пултарулла ертӳçёсен, хăйсен тивёçне пёлсе пурнăçлакансен – фермерсен, агрономсен тата ытти специалистăн çăмăл мар кулленхи ёçёхёлён кăтартăвёсем районăн экономика лару-тăрăвне кăна мар, кашни çемьен ытлăхне тёрев параççё.

Ёçченлёхшён, тӳсёмлёхшён, тăван çёре юратса тивёçе чуна парса пурнăçланăшăн сире питё пысăк тав.

Чунтан тухакан сăмахсемпе сире ăнăçу, çутă малашлăх, çирёп сывлăх, телей, вăй-хал тата ытларах çёнё çитёнӳсем тума хавхалану сунатăп.

Ⓟ 10-16

Хиселлё вёрентекенсемпе шкул умёнхи вёрентӳ учрежденийёсен ёçченёсем!

Андрей НИКОЛАЕВ,
Шупашкар район пуçлăхё

Сире професси уявёпе саламлатпăр!

Вёрентекен профессийё – пур вăхăтри чи сăваплă профессисенчен пёри. Вăл яланах пуян ăс-хакăллă тата кăмăл-сипете пысăка хуракан çӳллё шайри тёслёх пулса тăрать. Вăл ачасене çынсем хушшинче вырăн тупма, пысăк çул çине тухма хатёрлекен пёлӳ никёсне йёркелет.

Владимир ДИМИТРИЕВ,
райадминистраци пуçлăхён тивёçёсене пурнăçлаканё

Шупашкар районёнче вăй хуракан вёрентекенсем хăйсен квалификаци шайне çулранçул çирёплетсе тăраççё. Вёсен вёренекенёсем тёрлё шайри конкурссенче, олимпиадăсенче мала тухса малти вырăнсене йышăнаççё, экзаменсене ăнăçлă тытса аслă шкулсене вёренме кёреççё.

Çак уяв кунёнче сирён ырмиканми ёçёршён, суйласа илнё тивёçе тӳрё кăмăлпа пурнăçланăшăн чунтан-чёререн тухакан тав сăмахёсене йышăнса илсемёр. Професси уявё сире çёкленӳллё кăмăл, хавхалану, тивёçлё ырă хаклав, вёренекенсен ăшă саламёсене парнелетёр. Малашнехи ёçре сире çирёп сывлăх, ăнăçу, профессире пысăк çитёнӳсем, ырлăх-сывлăх сунатпăр!

Ⓟ 10-14

ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ

ШУПАШКАР РАЙОНЁНЧЕ КĂÇАЛХИ 9 УЙĂХРА МЕДИЦИНА УЧРЕЖДЕНИЙЁСЕНЕ сăвăç çыртнин сăлтавёпе 93 çын пынă, вёсен хушшинче 14 çул тултарман 27 ача. 82-шё кăпшанка лаборатории тёпчеме панă. Пур кăтарту та сăвăç чир хăрушлăхёллё пулманнине тупса палăртнă. Кăмпа пуçтармалли тапхăр пуçланнăранпа медицина учрежденийёсене сăвăç ернин сăлтавёпе пынă çынсен шучё ӳснё. Сентябрь уйăхёнче 21 çын хăйён ӳт-пёвё çинче сăвăç асăрханă, çав шутра 14 çул тултарман 6 ача та. Тухтăрсем патне Кӳкеçре тата Ишлейре пурăнакансем ытларах пыни паллă. ■

2017 ÇУЛХИ 8 УЙĂХРА МУНИЦИПАЛИТЕТРИ халăха социаллă хӳтлёх паракан уйрăма «Ёç ветеранё» ята илмешкён 52 çын пынă, «Чăваш Республикин Ёç ветеранё» ята – 9 çын, «Чăваш Республикин Ёç ветеранё» ята стажа кура илме – 214 çын. Çак тапхăрта 220 çын удостоверениллё пулнă.

«Чăваш Республикин ёç ветеранё» ята илмешкён ёç стажне чакарасси çинчен калакан Хушу вăя кёнёренпе 1557 çын удостоверени илнё. Паянхи куна Шупашкар районёнче 8056 ёç ветеранё пурăнать. «Ёç ветеранё» удостоверение 5090 çын илнё, вёсенчен 523-шё – ёçлекен çынсем. «Чăваш Республикин Ёç ветеранё» удостоверени 2627 çыннăн пур, вёсенчен 570-шё паянхи кун та тёрлё вырăнта тăрăшать. ■

ÇУЛТАЛĂК ПУÇЛАННĂРАНПА ШУПАШКАР РАЙОНЁНЧИ ХАЛĂХА СОЦИАЛЛĂ ХӲТЛЁХ ПАРАКАН УЙРĂМА сахал тупăшлă тесе йышăнма ыйтса 1263 çын заявлени çырнă. Çемьери вăтам тупăш республикăра палăртнă пурăнма кирлё чи пёчёк виçерен пёчёкреххине çирёплетекен справка илме кунта пыраççё. Вăл шкулта вёренекен ачасене тӳлевсёр апатланма, ача садне çӳренёшён тӳлемелли укçа-тенкён пёр пайёшён компенсаци илме май парать. Сахал тупăшлă тесе виçё уйăхлăха йышăнаççё, çак вăхăт иртсен кирлё документсене çёнетмелле. ■

Сар кайăк çуркуннене кётнё пек

Ăшша кётеççё район çыннисем

• КОММУНАЛЛĂ ХУÇАЛĂХ

Çёньялти «Пепке» ача садёнче халё те сивё

Йёпе-сапапа мар пулин те, сивё çанталăкпа кётсе илчёç пире юлашки эрнесем. Уйрăмах çакă ирсерен-каçсерен лайăх сисёнсе тăчё. Урамра шăнса ёнтёркенё çынсем килёсене ăшăнма васкаççё. Анчах та пур çёре те ăшă çитеймен-ха. Лару-тăру кашни сехетрех, минутрах улшăнса тăнине шута илсе çак эрнере ăшă пур çёре те çитессе шанас килет.

Уйрăммăн ăшăннин ырă енёсем

Чăваш Республикин Пуçлăхё Михаил Игнатьев тунтикун Министрсен Кабинетён членёсемпе тата федераци службисен Чăваш Енри уйрăмёсен ертӳçисемпе ирттернё ёçлё планеркăра та хутса ăшăтмалли тапхăра сӳтсе явнă. Михаил Игнатьев асăннă ыйтупа çыхăннă хыпарсене кашни кун пёлтерсе тăма хушнă. «Пирён хамăр ума лартнă тёллевсене туллин пурнăçлассишён çине тăрсах ёçлемелле. Çитес кунсенче çуртсене ăшăпа тивёçтерессине вёçлемелле», – çирёп каланă Республика Пуçлăхё. Вăл уйрăмшарăн ăшăтса тăмалли меслетён ырă енёсене палăртнă, кун пирки çынсене аса илтерсех тăма хушнă. Централизациленё майпа ăшăтса тăракан çуртсенчи хваттерсен хуçисем ăшă парасса кётсе кам мёнле пултарнă çапла ăшăнчёç пулсан, индивидуаллă тытăмпа усă куракансем хваттерсенче ăшăпа тахçанах рехетленеççё. Пёлтёртенпе çак меслете хăйсем çинче тёрёслекен чăрăшкассисем усă курнă газшăн тӳлемелли укçа виçи те самай пёчёкрех пулнине тата кăшт сивётсенех ăшă яма май пуррине палăртаççё.

Кăлтăка тупаймаççё

Хаçатăн иртнё номерёнче ăшă Кӳкеçри больницăна çитни пирки пёлтернёччё. Виçёмкун больницăра сипленекен арçын шăнкăравласа сиплев учрежденийёнче сивё пулни çинчен хыпарларё. Мёнле-ха капла? Котельнăя ёçлеттерме тытăнни çинчен, ăшă пани çинчен хыпара район администрацийён коммуналлă хуçалăх пайёнченех пёлтерчёç-çке-ха? «1977 çулта хута янă котельнăйра кăçал капиталлă юсав ёçёсем иртрёç. Больницăна пачах та ăшă пымасть тесе калама çук, котельнăй ёçлет, анчах та сывлăш çаврăнăшё пăсăлнăран ăшă пур корпуса та çитеймест. 5 корпусран 3-шёнче ăшă пур, стационар – унта 6 уйрăм, терапин 2-мёш корпусё, администраци зданийё хальлёхе сивё. Поликлиникăра та ăшă пур кабинета та çитеймест-ха. Эпир темиçе кун ирхи 5 сехетрен тытăнса кăлтăка тупасшăн канăça çухатрăмăр, хальлёхе унăн сăлтавне палăртма май килмест. Пур корпуса та ăшăпа хаваспах тивёçтереттёмёр, специалистсене чёнсе илнё, вёсен пулăшăвне шанатпăр», – уçăмлатрё лару-тăрăва хуçалăх уйрăмён ертӳçи Константин Гаврилов.

Парăм пуçа ыраттармасть-ши?

Çивёч ыйтусенчен пёри – çут çанталăк газёпе усă курнăшăн парăмсене татасси. Уйрăмах 11 районта кăтартусем пысăк, вёсен йышне Шупашкар районё те кёрет, муниципалитетăн сентябрён 29-мёшё тёлне 6 млн тенкё ытла парăм пухăннă, çапах та ку пёлтёрхи асăннă тапхăрпа танлаштарсан 10,9% сахалрах. Халăхăн управляющи компанисен умёнчи парăмё (сентябрён 1-мёшё тёлне) 30 млн ытла тенкёпе танлашать, çав шутра 21 млн ытла тенкё – татмалли вăхăтран ирттернё парăм. Управляющи компанисем парăма шыраса илес тёллевпе çулталăк пуçланнăранпа 18 млн тенкёлёх 1384 тавăç тăратнă. Пёрисем коммуналлă пулăшушăн вăхăтра, тӳрё кăмăлпа тӳлесе тăраççё пулсан, теприсем хăйсен тивёçне пурнăçламасăр парăмсен виçине ӳстереççё.

Паян-ыран çитмелле

Çёнё Тутаркассинчи социаллă пёлтерёшлё объектсене тата пурăнмалли çуртйёре ёнер те ăшă паманччё. Шкул директорё Людмила Петрова пёлтернё тăрăх, вёрентӳ учрежденийёнче ăшă тытăмне юсаса хатёрленё, чăрмавсем пулмалла мар. 250 ача вырнаçма пултаракан «Золушка» ача садёнче те пётёмпех хатёр, котельнăй ёçлесе каяссa кăна кётеççё.

➥4

йё пёлтернё тăрăх, вёрентӳ учрежденийёнче кăçалхи мартăн 1-мёшё тёлне çул çитменнисемпе ёçлекен комиссире 7 ача учетра тăнă. Вёренӳре ёлкёрсе пырайманнисемпе, уроксене сăлтавсăр сиктерекенсемпе калаçусем иртереççё. Вёсем шкула мёнле çӳренине тёрёслеççё, çул çитменнисемпе ёçлекен комиссин членёсемпе тёл пулусем йёркелеççё. Çакăн пек ачасен ашшё-амăшёпе тачă çыхăну тытаççё.

Райадминистраци пуçлăхён тивёçёсене пурнăçлакан Владимир Димитриев профилактика мероприятийёсен витёмне ӳстерме ура хуракан çитменлёхсем пирки кăсăкланчё. Валентина Александрова çуллахи канăва май килнё таран нумайрах ачана явăçтармалли çинчен каларё. Вăл палăртнă тăрăх, çулла сывлăха çирёплетмелли лагерьте пур вёренекенён 50% кăна канса ёлкёрет.

Телейлё наркомансем пулмаççё

РФ ШЁМён Шупашкар районёнчи уйрăмăн оперуполномоченнăйё Леонид Иванов муниципалитет территорийёнче хăйсен тёллён ӳсекен е ятарласа ӳстерекен наркотиклё ӳсен-тăрана тупса палăртса тёп тăвас ыйтупа комисси ларăвёнче тухса калаçрё. Кăçалхи тăхăр уйăхри цифрăсене илсе кăтартрё. Синтетикăллă наркотик хатёрёсене упрассипе тата сутассипе çыхăннă 8 преступление шута илнё. Наркотикле хатёрсене усă курнăшăн 10 çын тёлёшпе ёç пуçарнă, вёсенчен иккёшё медицина тёрёслевё витёр тухма килёшмен.

Шупашкар район территорийёнче «Мăкăнь» профилактика операцийён иккёмёш тапхăрё пырать. Шёнерпуç ял тăрăхёнче пёр хёрарăм хăйён анкартинче мăкăнь ӳстернё. Ӳсен-тăрана ятарласа лартман, вăл хăй тёллён ӳссе тухни, ăна кукăль тавраш пёçерме усă курнине ёнентернё хёрарăм. Ун тёлёшёпе РФ АК 10.5.1 статйипе протокол çырнă. Çавăн пекех Кӳкеç ял тăрăхёнче мăкăнь ӳстернё пёр тёслёхе тупса палăртнă. Шоссейная урамри пёр çурт умёнче те асăрханă çак ӳсен-тăрана.

Мăкăньпе кантăр ӳстернине тупса палăртас тесе сад юлташлăхёсен председателёсемпе тёл пулусем иртнё. Шупашкар район территорийёнче 147 сад юлташлăхё, анчах вёсенчен çуррийё председательсёр. Дача хуçисемпе тёл пулса çёршыв территорийёнче мăкăнь ӳстерме юраманни çинчен ăнлантарнă. Çакăн пек тёслёхсене тупса палăртсан йёрке хуралçисене пёлтермелле. Леонид Валерьевич ял тăрăх пуçлăхёсем тата çынсем пёр-пёринпе тачă çыхăнса ёçлесен кăна мăкăне, кантăра саккунсăр ӳстернине чарма май пуррине палăртрё.

«Шупашкар район территорийёнче халăхăн пурнăç хăрушсăрлăхне ӳстермелли çинчен калакан программăпа кăçал 153 пин тенкё уйăрнă, вёсенчен 20 пин тенкё çул çитменнисем пресс-

СĂМАХ МАЙ

2017 çулта ачасен канăвне йёркелеме Шупашкар район бюджетёнчен 8 млн тенкё уйăрнă.

МИЛЕНА СЕРГЕЕВА

Чĕпписене пăрахмаççĕ

• ТĔРЛЕНЧĔК

Эпир кăçал шăнкăрч вĕллисем çакнă та, кашни çуркуннех çак йăлтăртатакан хура тумлă вăр-вар кайăксем çунат çапса юрра шăрантарнине итлесе савăнатпăр. Шăнкăрчсем ялан тăван ялах таврăнаççĕ. Кил хуçисене хăнăхаççĕ пулас – этеме шанаççĕ.

Пĕррехинче пахчари йăрансем çумĕнче шăнкăрчсем çуйхашнине илтрĕм. Пăхатăп – çул çинче пĕр пысăк шăнкăрч чĕппи хутланса ларнă. Манран хăраса вĕçсе тарасшăн пек пулать те каллех çĕр çине анать. Куçран тинкерет, мăйне тăсса пĕр вĕçĕм чирр! чирр! тет. Инçех мар амăшĕ канăççăрăн унталлакунталла вĕçет, çуйхашать. Пулăшу кĕтеççĕ кусем – тавçăрса илтĕм эпĕ. Майĕпен çывхартăм та шăнкăрч чĕппи хăйне тыттарчĕ. Ак хайхи, икĕ ури çинче те, тупанĕ-чĕрнисем мĕнĕ, чул пек хытă муклашка иккен! Темле çилĕм çине пуснă пулас шăнкăрч чĕппи, тасалайман, вара тăпра çыпçăнса тулнă. Ура çине тăраймасть – «пушмак кĕллисем» чăрмантараççĕ. Ачасене хыпкăч (плоскогубцы) патне чуптартăм. Муклашкана асăрханса, майĕпен хăйпăта-хăйпăта шăнкăрч чĕппине инкекрен хăтартăмăр. Вĕçтерсе ярсан, амăшĕпе иккĕшĕ вирхĕнсе куçран çухалчĕç. Самантран каялла таврăнчĕç те пирĕн пуçсем çийĕн виçĕ хутчен вĕçсе çаврăнчĕç, савăнăçлăн чакăлтатрĕç – пире тав туни пулчĕ ĕнтĕ.

Тата çакă тĕлĕнмелле. Шăнкăрчă амăшĕ çухалнă та (ăна кушак тытнă-ши?) пĕр чĕппи йăваран тухса ӳксе вилнĕ, тепри выçса кайнăскер, чарăнмасăр сас парса ларать, вĕçме вĕренмен-ха. Вара вĕçсе килчĕç шăнкăрчсем, питĕ нумаййăн – шавлаççĕ, çĕмĕрĕлеççĕ, пуху ирттереççĕ пулас. «Каласа татăлчĕç» те пĕр харăс çĕклансе вĕçсе кайрĕç, пĕр ватă кайăка «нянькка» вырăнне хăварчĕç. Чăн-чăн кинеми ĕнтĕ лешĕ – çунаттисем çаралнă, тĕкĕ тĕссĕрленнĕ, хăй аран çаврăнкалать. Çавах тăлăха юлнă шăнкăрч чĕппине çăвĕпе пăхрĕ: хурт-кăпшанкă йăтрĕ, вĕçме вĕренрĕ. Кĕр енне шăнкăрч чĕппи çитĕнсе çитрĕ! Ăшă енне каяс умĕн иккĕшĕ те ытти шăнкăрчпа пĕрле тӳпене çĕкленчĕç, инçете çул тытрĕç.

ВЕНИАМИН ШИМАНОВ
КАЛАСА ПАНИНЕ ТАМАРА ВЕРЕНДЕЕВА ÇЫРСА ИЛНĔ

Сар кайăк ....

3 • КОММУНАЛЛĂ ХУÇАЛĂХ

Паянхи куна Ишлей салинче 3 котельнăй ĕçлет, анчах та хальлĕхе икĕ çĕнĕ блоклă модульлĕ котельнăя (пĕри нумай хваттерлĕ 5 çурта, тепри 4 çурта ăшăпа тивĕçтермелле) тĕрлĕ сăлтавпа ĕçлеттермеççĕ. Ял тăрăх пуçлăхĕ çак ыйтăва татса парассипе тимлет. Çĕньялти котельнăй ача садне тата поселокри нумай хваттерлĕ çуртсене ăшăпа тивĕçтерсе тăрать, анчах Çĕньялти «Пепке» ача садĕнче ĕнер те ăшă пулман – кун пирки социаллă сетьсенче çырса пĕлтерчĕç. Социаллă сетьсенче атайкассисем те хăйсен çурчĕсене ăшă пыманнине асăнчĕç.

Хаçат тухас умĕн çакăн пек хыпар çитрĕ: Кӳкеçре юлашки котельнăя – вăл 27-мĕш училищĕн – хута ярассипе тимлеççĕ. Кун пирки Кӳкеç ял тăрăх пуçлăхĕ Владимир Вершинин пĕлтерчĕ. Унăн сăмахĕсемпе, ытти котельнăй ĕçлет, çуртсене ăшă пырать.

Райадминистрацин коммуналлă хуçалăх пайĕн информацийĕпе ĕнер 16 сехет тĕлне нумай хваттерлĕ 116 çурта, 15 ача садне, 24 шкула, 52 сывлăх сыхлав учрежденине ăшăпа тивĕçтернĕ. Ĕнерех Атайкассинче те ăшă пама тытăннă. Ăшă паянах Тутаркассине, Çĕньяла çитмелле. Ларутăрăва социаллă сетьри хамăрăн «Вконтакте» официаллă страницăра пире вулакан пĕлтерсех тăчĕ. Ыйтусене тăхтамасăр ял тăрăх пуçлăхĕсем, должноçри яваплă сăпатсем патне çитертĕмĕр.

АННА ФИЛИППОВА

44 çул иртсен...

• ШКУЛ САККИ

Вăхăт шăвать – ĕмĕр иртет, яшлăх иртет – ватлăх килет. 1 класа каякан ачасене курсан, хамăр пĕрремĕш хут парта хушшине ларнине аса илтĕм.

2017 çулхи тĕл пулу.

Эпир шкула кайнă чух пурин те пир сумкăсемччĕ, анне мана кĕнекесене шурă катан пирпе чĕркесе çыхса пачĕ. «Пир сумка çĕлесе памастăп, ĕлĕк эпир ача чух çынсем пир сумкăсем тытса ыйткаласа çӳретчĕç. Ман ачасем ун пек ан пулччăр, пир сумка курса ывăннă эпĕ», – терĕ анне. Уçса хупмалли партасем, чернил пусса çырмалли пероллă ручка пулнă пирĕн. Шкула кайиччен вулама, шутлама вĕреннĕ. Ахаль çитсăран çĕленĕ хăмăр тĕслĕ кĕпе, шурă тата хура саппунсем – акă мĕнрен тăнă шкул форми. Çав-çавах мĕн тери илемлĕччĕ эпир ун чух! Халĕ ачасем çинче ун пек шкул формине курмастăп.

Пĕрремĕш класран тытăнса тăваттăмĕш класс таран эпĕ Мамка шкулĕнче вĕреннĕ, вăрçă инваличĕ Яков Федорович Никифоров пире ăс панă. Хăрах ури йывăçранччĕ унăн, питĕ лайăх вĕрентетчĕ. Кайран Ишлейри вăтам шкула 5-мĕш класа вĕренме килнĕ. Унта урăх ял ачисем те пулнă, Хачăкран та. Пирĕн класс ачисем сăпайлă, туслă пулнă, лайăх вĕреннĕ. Учительсенчен хăранă эпир ун чухне, вĕсене хисеплеменнĕ. Шкулĕ пирĕн икĕ хутлă йывăç çуртчĕ. Коридорсенче шăв-шав тăман, ачасем чупмастчĕç. Кам та пулин кăшт çеç шавласанах шкул директорĕ Георгий Константинович Павлов тепĕр куннех линейка иртteретчĕ. Унта ачасем умне тăратса ăçта васкаса чупнине ыйтатчĕ. Камăн намăсланас килет-ши ун пек – никамăн та. Классенче вĕренӳре мĕнле ĕлкĕрсе пынине кăтартакан экран пулнă, кашни кун уроксенче мĕнле паллăсем илни куçа курăннă. «3» паллă илсен те аванмарланнă. Шкул ун чух Олег Кошевой ячĕллеччĕ, класĕ пирĕн Володя Дубинин ячĕпе хисепленсе тăнă. Дружина отрячĕн ертӳçи 3-мĕш звено пулнă. Кашни звеньевой хăйĕн звенори ачасемшĕн явап тытнă. Дисциплина çирĕп пулнă.

9-мĕш класра пирĕн класа Кăшавăш ачисем хушăнчĕç. Питĕ маттур, лайăх ачасем. 1973 çулта эпир Ишлейри вăтам шкултан 10 класс пĕтерсе тухрăмăр. Пирĕн хушăра учительсем те, бухгалтерсем те, садик ертӳçисем те, хисеплĕ ят илнĕ профессиллĕ ĕçченсем.

Унтанпа 44 çул çитрĕ. Кăçал августăн 12-мĕшĕнче тĕл пулу ирттертĕмĕр. Шел те, 13-шĕ пирĕнпе çук. Паянхи куна асаннепе асатте ятне илтнĕскерсем 16-ăн пуçтарăнтăмăр, 4-шĕ килеймерĕç. Тĕл пулу кăмăллă иртрĕ, аса илӳ нумай пулчĕ. Эпир, 60 çултан иртнĕскерсем, питĕ савăнтăмăр. Вĕрентекенсем те сахалланса пыраççĕ, телее, Галина Николаевна Кондратьева (Соколова), Светлана Владимировна Егорова (Кузнецова), Виталий Петрович Елизаров халĕ те ачасене пĕлӳ параççĕ. Шел те, хамăр класс ертӳçи Галина Христофоровна кăçалхи тĕл пулăва кĕтсе илеймерĕ, пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Тĕл пулу йĕркелессине пĕлсен питĕ савăннăччĕ хăй, анчах пĕрле пулаймарĕ.

Халь нумай ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачисене вырăсла калаçма вĕрентет. Ку пачах та тĕрĕс мар, тăван чĕлхене юратмалла. Çамрăк ăрава чăваш чĕлхине упраса хăварма сунас килет.

АЛЕВТИНА НИКИФОРОВА,
ИШЛЕЙ

• КАЛЕНДАРЬТИ КУН

Кĕрхи «ăшă» уяв

Кашни çулах октябрĕн пĕрремĕшĕнче Ваттисен кунне уявлатпăр. Çав кун аслă çулти çынсене пурте ырлăхсывлăх, нумай çул пурăнма сунаççĕ. Çак йăлана Ишек салинче вырнаçнă васкавлă социаллă пулăшу паракан уйрăмра ĕçлекенсем те тытса пыраççĕ.

Уява тĕрлĕ ялти 25 ватă пуçтарăнчĕ. «Елочка» ача садне çӳрекен пĕчĕк шăпăрлансем Надежда Алексеева тата Алина Тихонова воспитательсем ертсе пынипе сăвă каласа, юрă юрласа тата ташă ташласа ватăсен чунне çемçетрĕç. Чунтанах хĕпĕртерĕç лешсем. Уйрăм заведующийĕ Венера Васильева ачасене пылак çимĕçпе хăналарĕ.

Хăнасене ветерансен канашĕн председателĕ Надежда Кудрганова ăшă-ăшă сăмахсем каларĕ, ачасемпе тата мăнуксемпе савăнса пурăнма сунчĕ.

Мĕн кăна çукчĕ пулĕ уяв сĕтелĕ çинче! Уйрăмра ĕçлекенсем тĕрлĕрен салат, пицца, кукăль таврашĕ хатĕрленĕ. Хăнасем те пушă алăпа килмен. Пурте пĕрле юрăсем те шăрантарчĕç уявра.

Ишекре çакăн пек васкавлă пулăшу паракан социаллă уйрăм ĕçлени пурне те килĕшет. Унта вăй хурăнсем кашни ватăпа пĕр чĕлхе тупма пĕлеççĕ, кирлĕ пулсан канаш та параççĕ. Аптекăран эмел туянмалла-и, е лавккаран тĕрлĕ çимĕç илсе килмелле – пĕр ыйтăва та тивĕçтермесĕр хăвармаççĕ. Нумай тав сăмахĕ илтрĕç кунта ĕçлекенсем.

ЕКАТЕРИНА ГРИГОРЬЕВА,
МĂН МАРКА

Чунпа çамрăк ватăсем

Пĕтĕм тĕнчери ваттисен кунне халалласа, аслă ăрури çынсене хисеплесе Шăнкас клубĕнче уяв каçĕ иртрĕ. Клуб çумĕнчи «Шурă акăш» ансамбль артисчĕсем ватăсене концертпа савăнтарчĕç, çавра сĕтел хушшине лартса çăка пылĕпе, чейпе сăйларĕç. Çав тери хастар хутшăнчĕç чунпа çамрăк ватăсем вăйăсене, ташларĕç, юрларĕç, çамрăк пурнăçа аса илчĕç. Çамрăклăх йывăр вăхăта лекнине аса илсен вĕсен куçĕсем шывланчĕç. Тулли кăмăлпа киле саланчĕç мучисемпе кинемейсем. Çапла, нумай та кирлĕ мар ватăсене чунĕсене савăнтарма. Мĕн кирлĕ чунпа çамрăк ватăсене – ачисем, мăнукĕсем, мăшăрĕсем юратни, пĕчченлĕхре хăварманни çителĕклĕ.

РУФИНА БОРОДОВА, ШĂНКАС

• ПУЛЬС РЕСПУБЛИКИ

Проверок станет меньше

«Создание благоприятных условий для развития бизнеса является одним из приоритетных направлений государственной политики республики», – заявил Глава Чувашии Михаил Игнатьев в ходе встречи с представителями предпринимательского сообщества 3 октября.

Он напомнил, что сегодня в регионе насчитывается более 45 тысяч субъектов малого и среднего предпринимательства, которые обеспечивают рабочими местами почти треть занятого населения региона. Глава Чувашии отметил, что по итогам Национального рейтинга, которые были озвучены Президентом России Владимиром Путиным на Петербургском международном экономическом форуме, Чувашия по уровню благоприятной деловой среды в этом году занимает 2 место среди субъектов Федерации.

Также он обратил внимание на то, что реформирование контрольно-надзорной деятельности на особом контроле Владимира Путина. В рамках реформы предусмотрено вдвое снизить количество плановых и внеплановых проверок бизнеса за 5 лет. В республике уже есть положительные результаты: отмечается тенденция к сокращению количества проверок и повышению их эффективности. Кроме того, с 2016 по 2018 годы действует запрет на включение в план проверок субъектов малого и среднего предпринимательства.

По информации отдела экономики, имущественных и земельных отношений администрации Чебоксарского района, в муниципалитете функционируют 2044 субъекта малого и среднего предпринимательства.

• ДЕЛА МЕСТНЫЕ

Книга о людях

3 октября в Центральной библиотеке поселка Кугеси состоялась презентация второй книги серии «Край родной Синьял-Покровский». Авторами материалов на русском и чувашском языках являются Галина Мочалова, Зоя Суркова и Тамара Верендеева.

Тираж – 300 экземпляров. Напомним, что первая книга была издана в 2009 году, в ней можно ознакомиться с историей поселения со дня организации сельских советов, колхозов, школ, культурных учреждений. Учитывая пожелания читателей о том, что в книге остались незамеченными интересные факты из жизни жителей, члены клуба «Краевед» при Пархикасинской сельской библиотеке и оргкомитет подготовили материалы для второго тома, а именно, биографии знаменитых людей, отметившихся своей деятельностью в период с 1990 по 2016 годы.

Отдельная глава в книге посвящена крупнейшему предприятию района – ЗАО «Чебоксарский электромеханический завод», который постоянно финансирует все важные социально значимые мероприятия в сельском поселении.

«Надеемся, что следующую книгу выпустят наши дети», – поделилась сотрудник Пархикасинской библиотеки, заслуженный работник культуры Чувашии Галина Мочалова.

• ТВОИ ЛЮДИ, РАЙОН!

Глава Чувашии Михаил Игнатьев подписал указ о награждении государственными наградами Чувашской Республики. Звание «Заслуженный учитель Чувашской Республики» присвоено учителю информатики Кугесьского лицея Алексею Егорову.

Его ученики много лет подряд становятся призерами и победителями регионального этапа Всероссийской олимпиады школьников. Он ведет в лицее кружок робототехники. Педагог Алексей Егоров работает в лицее более 20 лет.

Причебоксарье

Новости с пригородным акцентом

Огонь никого не щадит!

• БУДЬТЕ БДИТЕЛЬНЫ!

Еще не высохли слезы скорби и печали по безвременно ушедшему нашему коллеге Александру Яковлеву, оператору ГТРК «Чувашия». 45-летний мужчина погиб вместе с матерью при пожаре в деревне Хора-Сирма Ишакского сельского поселения.

После пожара в д. Хора-Сирма

По предварительной версии, произошло замыкание электропроводки. По словам врио начальника Отделения надзорной деятельности и профилактической работы по Чебоксарскому району Олега Порфирьева, владелец дома начал обшивку старого щитового родительского дома кирпичной кладкой. В этом доме он планировал жить с семьей. Накануне пожара строители вели работы допоздна, поэтому Александр остался ночевать в деревне. Эта роковая ночь стала для него последней...

Тема, связанная с пожарами, поднималась 2 октября на комиссии по предупреждению и ликвидации чрезвычайных ситуаций и обеспечению пожарной безопасности Чебоксарского района. В своем выступлении Олег Порфирьев отметил, что за 9 месяцев 2017 года на территории Чебоксарского района произошло 49 пожаров, что на 2 пожара меньше, чем в аналогичном периоде прошлого года. В этом году в огне погибли 6 человек, в прошлом – 5.

Основными причинами пожаров явились нарушения правил устройства и эксплуатации печей (14), электрооборудования (12), поджоги (11), неосторожное обращение с огнем (7), неисправность механизма транспортного средства (3), нарушение правил пожарной безопасности при эксплуатации газового оборудования (1). Шесть человек погибли вследствие пожаров в деревнях Мамыши, Челкасы, Хора-Сирма, в садоводческом товариществе «Дубрава», в автомобиле на берегу реки Цивиль. Из 49 случаев в жилых домах и надворных постройках произошло 33 пожара (67%), на дачах – 9, на транспорте – 4, на объектах бизнеса – 3.

«Графики проведения профилактических мероприятий на каждый квартал у нас готовы, согласно им мы выезжаем, в первую очередь, в многодетные, неблагополучные семьи, места проживания одиноких и престарелых граждан. Важное внимание уделяется печному отоплению, ветхой электропроводке, населению раздаем памятки», – рассказал Олег Станиславович. Он обратился к главам сельских поселений с просьбой предоставить списки населенных пунктов, где проживает наибольшее количество многодетных, неблагополучных семей и одиноких граждан.

Начальник 41-й пожарно-спасательной части Алексей Шангин поставил вопрос о ликвидации последнего безводного населенного пункта – это деревня Моштауши Абашевского сельского поселения. По его словам, эту работу необходимо было провести до 1 сентября, но в бюджете поселения средств не нашлось. Между тем, в Ишлейском сельском поселении аналогичная проблема в деревне Ядринкасы была решена.

Алексей Сергеевич напомнил, что в течение месяца проводилась плановая проверка наружных источников противопожарного водоснабжения, в результате которой было выяснено, что сооружения и сети водоснабжения в районе, в целом, эксплуатируются и содержатся в технически исправном состоянии. Несмотря на финансовые затруднения, руководители объектов экономики и главы сельских поселений стараются принимать меры для нормальной работы имеющихся коммуникаций. «В районе имеется 287 артезианских скважин, 450 колодцев. На территории муниципалитета расположены 524 источника противопожарного водоснабжения, из них 147 пожарных гидрантов, 85 естественных водоемов (всего 45 оборудованы пирсом для забора воды), 101 искусственный водоем, 191 водонапорная башня. По итогам проверки 11 источников противопожарного водоснабжения неисправны: 2 пожарных гидранта, 2 естественного и 2 искусственного водоема, 5 башен», – отметил Алексей Сергеевич.

Кроме этого на заседании обсудили такие вопросы, как сроки подачи тепла, отстрел лис, представляющих опасность для жителей района, готовность дорожного хозяйства к зимнему периоду.

ЯНА МАЙСКАЯ

• ДЕНЬ ЗА ДНЕМ

Сельский ученик не хуже

Пять школ Чувашии вошли в ТОП- 500 лучших школ России. Чебоксарские гимназия № 5 и лицеи № 3 и 44, новочебоксарские лицей № 18 и гимназия № 6 продемонстрировали высокие образовательные результаты в минувшем учебном году.

Унпа сумлă хăнасем те кăмăлтанах паллашрĕç. ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ – бюджет, финанс тата налог ыйтăвĕсен комитечĕн председателĕ Альбина Егорова, Шупашкар райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев, республика ведомствисенчен, общество организацийĕсенчен килсе çитнĕ хăнасем конкурса тăратнă ĕçсене пысăк хак пачĕç, вĕсемшĕн сасăларĕç те. Конкурс условийĕсемпе килĕшӳллĕн, хăй кăмăллана ĕçе палăртма кашнинех май пулчĕ. Халĕ вара пĕтĕмлетӳ тума та вăхăт.

Пиртен килмен лару-тăрăва пула ăна, малтан палăртнă пек, уявĕ концертĕнче тума май килмерĕ: çакăншăн вулаканран каçару ыйтатпăр. Тепĕр тесен пысăк ăсталăхпа пурнăçланă композицисене, хатĕрсене, пушшех те эсир пире мĕн тери хытă юратнине тата хисепленине ытларах çынна кăтартас килчĕ, çавăнпах иртнĕ тунтикун (октябрĕн 2-мĕшĕ) хамăрăн интернетри кăларăмра (tavanen.ru) сасăлав йĕркелерĕмĕр. Ĕнерхи 12 сехетчен унта 597 çын хутшăнчĕ. Çапах та татăклă сăмаха технологи предмечĕн вĕрентекенĕсенчен, пултарулăх кружокĕсене ертсе пыракансенчен, ахаль ăстаçăсенчен тăракан жюри членĕсем каларĕç.

Çĕнтерӳçĕ ĕçĕ

Ĕçсене пурне те пысăк техникăна пăхăнса, пач кăлтăксемсĕр тенĕ пек пурнăçланăран, вĕсене ачасем аслисен пулăшăвĕпе ăсталани куçкĕретех пулчĕ, çавăнпа та çĕнтерӳçĕсене çулсене кура мар, пурне те пĕр ушкăнра палăртнă. Конкурса хутшăннă кашни вулакана çакна ĕнентерекен сертификатпа хавхалантаратпăр. Ăна редакцие килсе илмелле (Кӳкеç поселокĕ, Шоссейная урам, 13 çурт, 2 хут, 7-мĕш пӳлĕм). Пахалăхлă ĕçсемпе палăрнă, жюрин пысăк хакне тивĕçнĕ Анастасия Андреева, тата Кӳкеçри шкул-интернат вĕренекенĕсем 2 тата 3-мĕш вырăнсемшĕн асăнмалăх парнесене тата диплома тивĕçĕç. Тĕп парне – кĕсье телефонĕ вара Елисей Архипова пӳрчĕ. Саламлатпăр!

Уява «Суварята» ансамбль (ертӳçи А.Музыкантов) хăйĕн çĕкленӳллĕ ташшипе пуçларĕ

САМАХ МАЙ

«Тăван Ен» хаçат редакцийĕн «Вконтакте» социаллă сетьри официаллă страницинче регистрацилленнĕ вулакансен йышĕ çак эрнере 2 пине çитрĕ. Tavanen.ru сеть кăларăмĕнче – 14 пине яхăн. Район, республика пурнăçĕпе çыхăннă чи юлашки информацине кунта паллашма май пур.

Çăвăн пекех жюри йышăнăвĕпе редакци ятарлă парнесемпе, дипломсемпе Дарья Ванюшкинăна (Кӳкеç), Нина Егоровăна (Ишлей), София Игнатьевăна («Крепыш» ача сачĕ), Анна Родионовăна («Крепыш» ача сачĕ), Софья и Александр Ивановсене (Ишлей) хавхалантарать.

Тирпейленĕ вырăнта мар

вараламан вырăнта таса

• 2017 ÇУЛ – ЭКОЛОГИ ÇУЛТАЛĂКĔ

Пĕр ӳкерчĕк паян та куç умĕнче – çул тăрăх çăмăл машинăпа пыракансем кантăка антарчĕç те пынă çĕртех пысăках мар тĕрке персе хăварчĕç. Çул хĕрринче салфеткăсем, апат-çимĕç юлашкине тултарнă хутаççем, тĕрлĕ ăпăр-тапăр йăваланса выртнине пурте курнă. Шел те, ун пекки кашни утăмрах.

Хăшĕ-пĕри тата кил таврашĕнче пухăннă каяша та – кĕленчесене, пластик япаласене, хутаççене – обществăлла чарăнăва е çул хĕррине ывăтса хăварма именмест. Чарăну вырăнĕсем вара каяш тултарнă хутаççемпе, ăпăр-тапăрпа нĕрсĕрленсе лараççĕ. Килсĕр йытă-кушак хырăм выççипе унта чакаланса çӳп-çапа йĕритавра сапалать.

Федераци пĕлтерĕшлĕ çулсем çинче подряд организацийĕсем çӳп-çапа пуçтарса, хыт хурана çулса тасатсах тăраççĕ. Çакна виçĕмкун хамăр та куртăмăр – Шăнкас çывăхĕнчи М-7 çул çинче подряд организацийĕн ĕçченĕсем çул хĕрринчи кивĕ курăка, хыт хурана бензинпа ĕçлекен çавасемпе çулатчĕç. «Республикăри пур района та çитетпĕр, кашни кунах çул çинче», – терĕç вĕсем пĕр самантлăха та ĕçе чармасăр.

Шупашкар район балансĕ çинче 295,511 км тăршшĕ 102 автомобиль çулĕ, вĕсенчен 99-шĕ хытă сийлĕ. Районти çулсене 2 подряд организацийĕ – «СК» «Алсер Строй» ООО тата «Дорстрой» ООО пăхса тăрать. Райадминистрацин хула тăвас ĕç тата архитектура пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, 2017 çулта çулсене пăхса тăма республика бюджетĕнчен 33 млн ытла укçа-тенкĕ уйăрнă, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 26 млн ытларах тенкĕ усă курнă. Подряд организацийĕсен тивĕçĕсен йышĕнче çул-йĕр çинчи шăтăк-путăка саплани, çул-йĕр паллисене лартасси, юрăхсăра тухнисене ылмаштарасси, çул хĕррисене çулса тирпейлесе тăрасси тата ытти ĕç. Асăннă подряд организацийĕсем сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 16146 тăваткал метр лаптăк çинче шăтăк-путăка саплаллă, çул хĕррисенчи курăка çулнă, çамрăк йывăçсен хунавĕсене кăкланă, 20 т ытла çӳп-çапа хытă каяшсен полигонне ăсатнă.

Район тата ял тăрăх пĕлтерĕшлĕ çулсем çинчи лару-тăрупа паллашас тĕллевпе çула тухрăмăр. Чăрăшкасси ялĕ çывăхĕнчи çул хĕрринче подряд организацийĕ ӳссе пыракан хунавсемпе тĕмсене кăкласа тирпейленĕ. Каснăскерсене пуçтарма ĕлкĕреймеччĕ-ха. Кӳкеç поселокĕнчен тухса Иккасси еннелле каякан çул çинчи обществăлла транспорт чарăнăвĕ, мĕн астăвасса, час-часах çӳп-çаппа тулса тăратчĕ. Хальхинче унта çӳп-çап нумаях марччĕ, çапах та такамсем ăпăр-тапăр тултарнă икĕ хутаça чарăну çывăхнех пăрахса хăварнă. Сапаланса выртакан хутаççем те тавралăха илем кӳмеççĕ. Контейнерсем патне çитме ӳркеннĕ ĕнтĕ услапсем.

Кам айăпĕпе тасамарланать çут çанталăк, кама пула çӳп-çаппа чыхăнать Çĕр-аннемĕр? Хуравне аякра шырама кирлĕ мар. Айăпли – этем. Çĕнĕ йышши технологисем вăй илсе аталанса пыни те этемлĕхе, енчен те вăл çут çанталăкшăн хăй яваплине туймасан, усă кӳмĕ. Ӳссе пыракан ăрăва та мĕн пĕчĕкрен тавралăха юратма, упрама вĕрентесчĕ. Çакна вара пирĕн хамăртан тытăнмалла. Тирпейленĕ вырăнта мар, вараламан вырăнта таса.

АННА ФИЛИППОВА

РОСГОССТРАХ: 96 лет вместе со страной

Ⓟ 10-13

1 • ИЗ ПЕРВЫХ УСТ

6 октября страховая компания «РОСГОССТРАХ» празднует День российского страховщика и 96-летие со дня своего основания. В этом году праздник проходит под лозунгом: РОСГОССТРАХ. ВСЕГДА ВМЕСТЕ СО СТРАНОЙ.

За 96 лет Росгосстрах пережил многое и сумел заслужить статус самой народной страховой компании. И сегодня многолетняя победная закалка позволяет Росгосстраху оставаться флагманом страховой отрасли и лидировать на рынке Чувашии. В преддверии Дня страховщика мы пообщались с директором страхового филиала в п. Кугеси Альбиной ИВАНОВОЙ.

– Альбина Леонидовна, с какими результатами сегодня РОСГОССТРАХ подходит к празднованию своего 96-летия?

– РОСГОССТРАХ сегодня остается лидером страхового рынка Чувашии. Ежедневно компания выплачивает более 1,7 млн рублей в день своим страхователям – жителям Чувашской Республики. Госстраховцы защищали, защищают и будут защищать интересы своих клиентов. За годы работы в компании накоплена уникальная информация по рисковым составляющим для каждого населенного пункта: вероятность затопления, пожароопасность, подверженность разрушительному воздействию ураганов.

– Как Вы оцениваете итоги работы страхового отдела в поселке Кугеси за первое полугодие 2017 года?

– В нашем отделе п. Кугеси трудятся 54 сотрудника, из них 19 страховых агентов этому делу отдали более 10 лет. Наши страховые агенты за 1 полугодие заключили более 4,5 тысячи договоров. Чаще всего люди страхуют дома и строения, крупный рогатый скот, в последнее время активно заключаются договоры по страхованию от несчастных случаев. С начала года РОСГОССТРАХ выплатил более 2,1 млн рублей по налогам в бюджет п. Кугеси.

– Ваш основной показатель работы — это страховые выплаты. Как с ними обстоят дела?

– С января по июнь текущего года компания выплатила по заключенным договорам сумму более чем на 5,8 млн рублей. А общая сумма ответственности компании «РОСГОССТРАХ» по всем договорам страхования, заключенным в п. Кугеси и Чебоксарском районе, составляет около 2,5 млрд рублей. Радует, что все больше людей понимают важность страхования строений. Страховые выплаты позволяют значительно снизить тяжесть убытков после пожара или, к примеру, после повредившего кровлю или окна урагана. У нас растет число постоянных клиентов, которые с нами уже на протяжении десятков лет. Их доверие к компании «РОСГОССТРАХ» подтверждено гарантированными и оперативными выплатами.

– Какие еще услуги вы предоставляете?

– В отделе п. Кугеси функционирует и РОСГОССТРАХ БАНК. Он предоставляет широкую линейку застрахованных вкладов для физических лиц, которые отвечают любым потребностям клиентов. Кроме этого принимаем платежи, переводы и выдаем пенсионные карты МИР. Росгосстрах имеет свой негосударственный пенсионный фонд.

– Что бы Вы хотели пожелать нашим читателям?

– Повышать финансовую грамотность и активно защищать свое имущество, здоровье, жизнь с компанией «РОСГОССТРАХ». К тому же она отмечает свое 96-летие и готовится к вековому юбилею. ■

Будьте в курсе новостей! Читайте нас на

www.tavanen.ru

▶ ОСНОВНОЙ ПРИЧИНОЙ ДТП ЯВЛЯЕТСЯ "ЧЕЛОВЕЧЕСКИЙ ФАКТОР" — НЕВНИМАТЕЛЬНОСТЬ ВОДИТЕЛЕЙ, КОТОРЫЕ НАРУШАЮТ ПДД.

Все службы района к учению готовы

Знание спасет жизнь

Ежегодно 4 октября в России отмечается День гражданской обороны

• ДАТА

В связи с этим в Чувашской Республике в 6 часов утра с получением условного сигнала началась Всероссийская штабная тренировка по гражданской обороне (ГО), которая проводится с 4 по 6 октября 2017 года. Проведены оповещение и сбор руководящего состава ГО. «Учение проходит в три этапа. Начало первого этапа показало полное взаимодействие федеральных и республиканских органов власти, органов местного самоуправления и организаций. Силы и средства гражданской обороны – спасатели, техника, а также нештатные аварийно-спасательные формирования – готовы к учениям и выполнению задач по обеспечению комплексной безопасности жизнедеятельности населения», – отметил председатель Государственного комитета Чувашской Республики по делам ГО и ЧС Вениамин Петров.

Сотрудники 41-й пожарно-спасательной части п. Кугеси

И.о. главы администрации района В. Димитриев провел смотр готовности служб

Глава Чувашии Михаил Игнатьев также принял участие в совещании с министром РФ по делам ГО, ЧС и ликвидации последствий стихийных бедствий Владимиром Пучковым.

Во всех школах страны в эти дни проводятся открытые уроки по гражданской обороне. В Атлашевской школе Чебоксарского района заместитель начальника 41-й пожарно-спасательной части п. Кугеси Николай Александров рассказал школьникам о том, что такое гражданская оборона, когда структура была образована в России, а также о правилах поведения в чрезвычайных ситуациях. «Мы знакомим детей с правилами поведения при пожаре в быту, безопасности в лесу, на воде. Если ребенок с детства знает основные правила поведения в экстренных ситуациях, это может спасти ему жизнь», – отметил Николай Николаевич.

5 октября на площадке перед ФОКом «Улăп» в поселке Кугеси состоялся смотр техники, применяемой при проведении аварийно-спасательных работ. Была выставлена спецтехника пожарной части, полиции, газовой службы, неотложной помощи, общественного питания, ветеринарной службы и т.д. ■

К СЛОВУ

4 октября в России отмечается 85-летие со дня образования гражданской обороны в стране.

• БУДЬТЕ БДИТЕЛЬНЫ!

Внезапно поезд НЕ ОСТАНОВИТЬ!

Железнодорожный переезд – один из сложных и опасных участков дороги, требующий особой внимательности и строгого соблюдения Правил дорожного движения.

Из года в год увеличивается количество столкновений автотранспортных средств с поездами, гибнут люди, наносится значительный материальный ущерб. Основной причиной ДТП является «человеческий фактор» – невнимательность водителей, которые, нарушая ПДД, проезжают под запрещающие показания переездной сигнализации, объезжают закрытые шлагбаумы, а также зачастую управляют транспортным средством в нетрезвом виде или наркотическом состоянии.

К примеру, трагический случай произошел недавно, в сентябре текущего года, в Ибресинском районе недалеко от населенного пункта Климово – ДТП с участием грузовика и пригородного рельсового ж/д автобуса «Канаш-Алатырь». По предварительным данным, водитель иномарки пытался проскочить переезд на запрещающий сигнал светофора. В результате вагон, в котором находились 20 человек, сошел с рельсов, а машина перевернулась. Водитель скончался в медицинском учреждении.

По информации ГЖД по безопасности движения поездов г. Казань, в основном в аварии попадают молодые ребята либо пожилые люди. В первом случае молодежь отвлекается на мобильные телефоны, планшеты, слушает громкую музыку. Во втором случае – водителей подводит возрастная невнимательность. ■

• ДЕЛА МЕСТНЫЕ



В Новотренькасинском детском саду «Родничок» в средней группе «Кораблик» проходит выставка «Дары осени», созданная руками родителей воспитанников.

Различные работы, сотворенные из овощей, грибов, шишек, листьев, дерева, радуют глаз воспитателей и детишек.

Скидки до 50%
Пластиковые окна от оконного завода
Летние суперскидки.
От 2800 руб.
ЗА ДЕРЕВЕНСКОЕ ОКНО.
Утепленные в 3 стекла.
Вызов замерщика бесплатно.
8-927-668-69-55.
06-68

Коллегия юридической защиты
Юридическая помощь по возврату водительских удостоверений. ДТП. Возврат по амнистии уже лишенных прав. Официально.
Тел.: 8-800-35-01-002. Звонок бесплатный!
05-04

ОХРАННИКИ. Вахта 15/15, 30/15.
Прямой работодатель. Проживание, лицензирование, авансирование.
З/п от 40000 р.
г. Москва, м. Братиславская, ул. Люблинская, д. 151.
Т.: 84951505298, 88007758029 - бесплатный вызов.
09-23

СУТАТПĂР
ПРОДАЕМ

08-25. Ячмень, пшеницу. Доставка. Тел.: 8-927-868-35-63.

09-37. Сено с доставкой. Тел.: 8-917-652-96-14.

08-30. Сено, солому, зерно. Тел.: 8-903-346-71-89.

06-42. Продаю гравмассу, песок, щебень, бой кирпича и бетона, цемент М-400, М-500. Доставка. Тел.: 8-927-849-76-75.

10-07. Любой кирпич. Тел.: 8-927-667-83-78.

09-01. Гравмассу, песок, щебень, торф. Недорого. Доставка. Тел.: 8-927-850-39-81.

10-06. Косилку ротационную навесную «WIRAX»Z069(1,35 м). Тел.: 8-927-857-35-29.

10-04. Телят. Доставка. Тел.: 8-927-984-15-15.

ТУЯНАТПĂР
КУПИМ

07-03. Корову, бычка, телку, овец. Тел.: 8-905-342-39-43.

05-38. КРС, свиней, лошадей. Тел.: 8-902-327-56-06.

05-14. Куплю КРС. Дорого. Тел.: 8-905-197-61-66.

ПУЛĂШУ
УСЛУГИ

06-43. Строительство домов и бань под ключ. Кровельные и отделочные работы, обшивка фасадов. Кладка, фундаменты. Заборы. Срубы. Тел.: 8-927-667-03-55.

ҪУРТ-ХВАТТЕР
НЕДВИЖИМОСТЬ

10-05. Продаю комнату. г. Чебоксары, пр. Ленина (центр). 9 кв.м. 380000 руб. Тел.: 8-900-331-76-78.

ЁҪ
РАБОТА

10-08. Требуются лицензированные охранники для работы в с. Ишлеи, п. Кугеси. Тел.: 22-88-50, 8-917-078-88-50.

МКК АВА-Финанс
Займы на выгодных условиях
☎ 8-966-249-48-48
п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13
09-15

1 кв.см.
МОДУЛЬНОЙ РЕКЛАМЫ
от 26 рублей

Сдаем в аренду офисное помещение площадью 23,7 кв. м. на 6 этаже редакционно-издательского комплекса «Дом печати»: г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13. Охрана. Видеонаблюдение. Парковка. Здание телефонизировано, интернет – оптоволоконные линии связи. Цена 176 руб/кв.м. НДС нет. Стоимость аренды не включает коммунальные платежи. Тел.: 67-15-51, 20-10-85 в раб. дни с 8-00 до 17-00.

ВНИМАНИЕ! ИСТОЧНИК ПОВЫШЕННОЙ ОПАСНОСТИ!

К сведению руководителей промышленных предприятий, строительно-монтажных организаций, колхозов, совхозов, фермерских и арендных хозяйств, других землепользователей и частных лиц.

Чебоксарское ЛПУМГ - филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» уведомляет: по землям Чебоксарского района проходят газопроводы-отводы высокого давления (от 55 до 75 атмосфер), обеспечивающие потребности промышленных предприятий и населения района в природном газе, являющиеся объектами повышенной опасности!

Строительными нормами и правилами СНиП III-Д.10-62 (Актуализированный СНиП 2.05.06-85) установлены ЗОНЫ МИНИМАЛЬНО-ДОПУСТИМЫХ РАССТОЯНИЙ от осей газопроводов и границ газораспределительных станций (далее – ГРС) до населенных пунктов, отдельных промышленных и сельскохозяйственных предприятий, зданий и сооружений, отдельно стоящих нежилых и подсобных строений, гаражей и открытых стоянок для автотранспорта, коллективных садов, автомобильных и железных дорог. Зоны минимальных расстояний составляют от 100 до 350 метров в зависимости от диаметра газопровода, степени ответственности объектов, указанных на знаках закрепления газопроводов и служат для обеспечения безопасности этих объектов.

На указанных земельных участках НЕ ДОПУСКАЕТСЯ строительство каких бы то ни было зданий, строений и сооружений в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения (Земельный Кодекс РФ № 136-ФЗ от 25.10.2012г. ст.90 п.6).

В соответствии с требованиями Федерального Закона от 31.03.1999г. № 69-ФЗ ст. 32 здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, ПОДЛЕЖАТ СНОСУ за счет средств юридических и физических лиц, допустивших нарушение.

Приватизация земель в зоне минимально допустимых расстояний НЕ ДОПУСКАЕТСЯ без согласования с организацией эксплуатирующей газопровод и ГРС – Чебоксарского ЛПУМГ - филиалом ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород».

Кроме того, Правилами охраны магистральных трубопроводов, утвержденными Постановлением Правительства и Госгортехнадзора РФ (№ 9 от 22 апреля 1992 года), в целях исключения возможных повреждений газопроводов, установлены ОХРАННЫЕ ЗОНЫ газопроводов в виде участков земли, примыкающих к газопроводу на всем протяжении на расстоянии 25 метров от оси газопровода с каждой стороны и в 100 метрах от каждой стороны ограждения ГРС.

ЛЮБЫЕ РАБОТЫ в охранных зонах без письменного разрешения Чебоксарского ЛПУМГ - филиала ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород», эксплуатирующего газопроводы и ГРС, ЗАПРЕЩЕНЫ.

В настоящее время УЧАСТИЛИСЬ СЛУЧАИ ПОВРЕЖДЕНИЯ газопроводов строительной техникой организаций, выполняющих земляные работы в охранных зонах газопроводов без соответствующего разрешения, в том числе электрических кабелей, линий телерадиокоммуникаций, водопроводов, нефтепроводов и т.д.

Механическое повреждение газопровода высокого давления может привести к НЕГАТИВНЫМ ПОСЛЕДСТВИЯМ - взрыв большой разрушительной силы, человеческие жертвы, материальные потери и прекращение газоснабжения потребителей.

Виновные в нарушении Правил охраны магистральных трубопроводов и СНиП подвергаются уголовному преследованию по ст. 269 УК РФ.

СВЕДЕНИЯ о местонахождении газопроводов и ГРС, а также размер установленной зоны минимально допустимых расстояний и охранной зоны конкретного земельного участка, заинтересованные юридические и физические лица могут получить в местном комитете по земельным ресурсам и землеустройству, а также в Чебоксарском ЛПУМГ - филиале ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород».

При обнаружении утечек газа в охранных зонах и зонах минимальных расстояний магистральных газопроводов работ, по вопросам производства строительно-монтажных и других работ в зоне прохождения газопроводов, а также для предупреждения нежелательных последствий при оформлении сделок с землями, по которым проложены газопроводы, обращайтесь в Чебоксарское ЛПУМГ - филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород».

По телефонам 8-(8352) - 30-54-09, 30-54-22.
или по адресу: 428027, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25.

10-12

ООО «ТМ»
ПРОИЗВОДИМ И ДОСТАВЛЯЕМ БЫСТРО, КАЧЕСТВЕННО, С ГАРАНТИЕЙ
ПРОФНАСТИЛ
ДЛЯ КРЫШ И ЗАБОРОВ оцинкованный и с полимерным покрытием разных цветов
МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦА «МОНТЕРРЕЙ»
Производство на новом современном оборудовании
Изготовление по размерам Заказчика, а также:
■ доборные элементы на заказ; ■ трубы профильные
■ крепеж в ассортименте; ■ евроштакетник для забора цветной металлический
ЗАЯВКИ ПО ЗВОНКУ. ОПЛАТА ПРИ ДОСТАВКЕ.
89524659723; 89290427904;
тел/факс: 8(83174) 2-86-05.
ЭЛ. ПОЧТА: ooo-tm1@mail.ru, САЙТ: profil-tm.ru
ДОСТАВКА 1000 рублей
09-49

УСАЛ ХЫПАР

ИРТНĔ ЭРНЕРЕ ТОЛИК ХУРАСКИ ЯЛĔНЧЕ ВĂРĂ-ХУРАХСЕМ ЛАВККАНА ÇАРАТСА ТУХНĂ. Унчен эрне маларах çак мелпех кукăр алăллисем Шемшер ял тăрăхĕнчи Шорчекассинчи суту-илӳ вырăнне те пушатнă. Лавккасем ял хĕрринче вырнаçни, хуралсăр пулни паллă. РФ ШĔМĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕ Евгений Петров сăмахĕсем тăрăх, унччен маларах Сĕнтĕрвăрри районĕнчи пĕр ял вĕçĕнчи лавккана та куç хывнă. Полици органĕ малтанлăха палăртнă тăрăх, лавккасене пĕр ушкăнах тапăнать.

Çавăн пекех иртнĕ эрнере Çатракасси ялĕпе юнашар вырнаçнă виçĕ дачăра та вăрăсем хуçалании паллă.

ШУПАШКАР РАЙОН ПРОКУРАТУРИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ ТĂРĂХ, иртнĕ эрнере вăрăсем Илпеш ялне хирĕç вырнаçнă «Дубровка» коллективлă поселокри тимĕр гаража иленнĕ. Çăраççи вĕсемшĕн чăрмав пулман-мĕн. Ăна çĕмĕрсе хайхисем гаражран сварка аппаратне, болгарка, сварка маскине йăкăртнă. Гараж хуçине 4500 тенкĕлĕх сăтăр кӳнĕ.

Çак кунсенчех «Дубровка» коллективлă поселокри йывăç витере вăрă-хурах хыççăн ура йĕрĕсем кăна юлнă. Çăраççи шанчăклă хуралçă мар çав. Кукăр алăллăскерсем вите алăкĕсене çăмăллăнах уçнă. Унтан удлинитель тата монтировка çаклатса тухнă. Çак икĕ преступление пĕр ушкăнах тунă-и – кăна йĕрке хуралçисен уçăмлатма тивĕ.

СЕНТЯБРĔН 28 – ОКТЯБРĔН 1-МĔШĔСЕНЧЕ ĂСТАКАССИНЧИ ÇĔНĔ ÇУРТ ХĂПАРАКАН ÇĔР УЧАСТОКĔ ÇИНЧИ строительство будки «ураланнă». Вăрăхурахсем çăраççие çĕмĕрсе кĕнĕ. Уйăх çутипе электроинструментсем – пысăк пусăмлă мойка, электрорубанок, болгарка, виçĕ шуруповерт, сварка аппаратĕ, дренажлă насос, электролобзик, шлифомашина – вăрласа тухнă вĕсем.

ВĂРМАН-ÇĔКТЕР ЯЛ ТĂРĂХĔНЧИ ПĔР АРÇЫН ВАРА АРĂМНЕ ЙĔРКЕЛЛĔ КУН ТА КĂТАРТМАН, кăвак пит-куçпа тăтăшах çӳреттернĕ. Кăçал апрель уйăхĕнче РФ УК 119-мĕш статйипе (1-мĕш пай) (вĕлерессипе хăратни е сывлăха йывăр суранлатни, енчен те çак юнава пурнăçа кĕртессинче хăрама сăлтав пулнă пулсан) айăпланнăскерĕн ирĕке тухсан алли татах кĕçтеме пуçланă-тăр. Хĕрарăм çине тăтăшах алă çĕкленĕшĕн арçын тĕлĕшĕпе РФ УК 117 статйипе (1-мĕш пай) ĕç пуçарнă. Çынна хĕнесе пуçмăрта тытма юраманнине çаплах ăса хывайманскере виçĕ çул таран тĕрмене хупса ирĕкрен хăтарма пултараççĕ. ■

Центр занятости населения ИНФОРМИРУЕТ

КУ ЦЗН Чебоксарского района Минтруда Чувашии приглашает безработных граждан пройти профессиональное обучение и дополнительное про-фессиональное образование по специальности «Охранник 4 разряда», «Оператор заправочных станций», «Лифтер».

Обучение бесплатное, в период обучения выплачивается стипендия.

Всех желающих ждем в Центре занятости населения по адресу: п. Кугеси, ул. Советская, д. 23, кабинет №204 Телефон для справок: 2-11-77

10-11

ПАМЯТНИКИ от 2000 рублей
АО «Базальт» г. Чебоксары, ул. Гладкова, д. 7.
предлагает ПАМЯТНИКИ, КРЕСТЫ ИЗ МРАМОРНОЙ КРОШКИ, ЧЕРНОГО ГРАНИТА, СЕРОГО И БЕЛОГО МРАМОРА.
● Столики, скамейки, ограды, венки.
● СКИДКИ, РАССРОЧКА ПЛАТЕЖА. ГАРАНТИЯ.
ДОСТАВКА И УСТАНОВКА. БЕСПЛАТНОЕ ХРАНЕНИЕ.
☎8 (8352) 56-29-68.
01-73

Рубрика «СОБОЛЕЗНОВАНИЕ»

для юрлиц и ИП[1] – **600 РУБ,**
для частных лиц[2] – **400 РУБ.**

[1] Свыше 40 слов – дополнительно 25 руб, за каждое слово.
[2] Свыше 40 слов – дополнительно 18 руб, за каждое слово.

ХУРЛАНАТПĂР
СОБОЛЕЗНОВАНИЕ

СХПК-колхоз им. Ленина выражает искреннее соболезнование Григорьеву Михаилу Константиновичу и Григорьеву Сергею Константиновичу в связи со смертью матери –
Валентины Егоровны ГРИГОРЬЕВОЙ,
много лет проработавшей в колхозе. *10-03.*

Таван Ен

Учредитель (соучредители): Министерство информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики, Автономное учреждение Чувашской Республики «Редакция газеты «Таван Ен» Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике - Чувашии 05 октября 2012 г. **ПИ № ТУ 21-00231.**

Газета распространяется в Чебоксарском районе, гг. Чебоксары и Новочебоксарск, а также в райцентрах Чувашской Республики

Выходит по пятницам на чувашском языке, с подачей некоторых материалов на русском.

Гонорар выплачивается только за материалы, написанные по заказу редакции. Рукописи, фотографии, рисунки не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. Редакция не вступает в переписку с читателями. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

При подготовке материалов использованы информация и фотографии с сайта администрации Чебоксарского района, официального портала органов власти Чувашии www.cap.ru, и сайта «Российской газеты».

Подписной индекс газеты **54820**

Адрес редакции и издателя: **АУ «Редакция газеты «Таван Ен» Мининформполитики Чувашии**
429500, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13
E-mail: **tavan-en21@yandex.ru** Сайт: **www.tavanen.ru**
Факс: 8(83540) **2-21-88, 8(8352) 20-10-85**

Тел. для справок – 8 (83540) **2-12-59**. | ***Отделы:*** новостей и общественной жизни – **8 (83540) 2-21-88,** | местного самоуправления, социальной политики и организационно-массовой работы – **8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 20-10-71,** | рекламы и подписки – **8 (83540) 2-12-59,** | бухгалтерия – **8 (8352) 20-10-85,** | гл. редактор – **8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 20-10-85.**

Прием объявлений и рекламы, подписка с 8.00 до 17.00
E-mail: **tavanen@mail.ru** **Тел.:** 8(83540) **2-12-59**

И.о. главного редактора **В.А. ВЫШИНСКАЯ**
Дежурный по номеру **В.Ф. ШУМИЛОВА**

Материалы, обозначенные знаком Ⓟ, а также в рубриках «Саламлатпăр», «Тав тăватпăр», публикуются на платной основе.
© Перепечатка или иное воспроизведение материалов без письменного разрешения редакции запрещена.

Печать офсетная.
Объем 3,0 печ. л.
Время подписания в печать: по графику – 18.00, фактически – 17.30 05.10.2017 г.
Дата выхода в свет: 06.10.2017 г.
Тираж **2640 экз.**
Заказ № 3366
Номер отпечатан в ОАО «ИПК Чувашия» 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
Цена свободная

Чи паха парне мĕн хак?
▶уйрăм çынсемшĕн – 500 тенкĕ; ▶предприяти-организацисемшĕн – 600 тенкĕ; ▶сăн ӳкерчĕк 100 тенкĕ. Квитанципе 40% йӳнĕрех.

Кĕрхи уяв – Кĕр сăри

• ЙĂЛА-ЙĔРКЕ

Авалтан пыракан йăла-па чăвашсем кĕрхи ĕç-сене вĕçлесен Кĕр сăри уявне паллă тунă. Ирт-нĕ шăматкун Станъял-лти «Чемен карти» эт-нопарк та хăнасене та-рават пулчĕ.

Вĕсене Никита Мака-ровпа Катя Тоскано-ва аслă хапха умĕнче çăкăрпа, сăрапа кĕт-се илчĕç. Палăртнă вăхăта ял тăрăхĕнчи 11 ялăн хастар çыннисем пуян сĕтел хатĕрлерĕç. Кашни ял хăйĕн кил картишне илемлетрĕ. Чи малтанах «Чемен карти» çумĕпе Экологи çулталăк-не халалласа хыр хунавĕсе-не лартрăмăр. Унта Шупаш-кар районадминистрацин вĕ-рентӳ пайĕн пуçлăхĕ Борис Романов, Муркаш шкул ди-ректорĕ Николай Смирнов, Станъялти Ваттисен Канашĕн ертӳçи Владислав Эльмен та-та вырăнти депутатсем хас-тарлăх кăтартрĕç. Тавра-пĕлӳçĕсен сцени çинчен ЧР Ват-тисен тĕп Канашĕн ертӳçи Виталий Станъял ăсчах Кĕр сăри пилне пачĕ. Уява Свет-лана Мартьяновăпа Любовь Иванова ертсе пычĕç. Сум-лă хăнасем музея парнесем пачĕç. «Питĕ вăйлă, сумлă музей туса хунă. Экспонат-сем нумай», – хак пачĕ ЧР Патшалăх Канашĕн депута-чĕ Юрий Зорин.

Котеркассинчи «Шордан» халăх фольклор ушкăнĕ, Мал-ти Ункăпуçĕнчи «Ункă шевлис-сем», Çӳлтикассинчи «Палан», Кăшавăшри «Алтăр çăлтăр» пултарулăх ушкăнĕсем юра-ташăпа савăнтарчĕç. Концерт хыççăн аслисем уяв сĕтелĕ-пе сăйланчĕç. Хăнасемпе жю-



В. Мартьянов Хисеп хутне тивĕçрĕ

ри членĕсем ял картишĕсе-не тишкерчĕç. Кристина Се-менова тата Ольга Романова вут чĕртсе 2 хуранта шаркку пĕçернĕ, чей вĕретнĕ. Пӳре-меч-кукăль пурин кăмăлне те кайрĕ. Нина Матюшкина, Ва-лентина Прокопьева тата Га-лина Романова сăра вĕретсе хатĕрленĕ. Çак йĕркесен ав-торĕ хăнасене сăра ĕçтерме сăн ӳкерчĕкпе илемлетнĕ Кĕр сăри куркисене хатĕрлерĕ.

Салапайкассисен картишĕн-чи сĕтелĕ те туллиех, сăри те пур. Хуранти «Салтак пăттине» Галина Ковковăпа Надежда Морозова пĕçернĕ. Кукăль-пе сăрана Галина Ельмеш-кина хатĕрленĕ. Вĕсен ялĕн-чи 87-ри Елизавета Лебеде-ва уяв кăмăла кайнине пĕл-терчĕ. Вăрманкассинчи «Сă-ра картишĕн» сĕтелĕ çинче 11 тĕрлĕ хăмлаллă сăра. Вĕ-сене Александр Селедкин-па Надежда Ерманова Юлия Петуховăн рецепчĕсемпе ха-тĕрленĕ. Ия Степанова пĕçер-нĕ кукăлĕсене те юратсах ту-тантăмăр. Юлия Петуховăн какай шӳрпийĕ те ăнса пул-нă. «11 тĕслĕ Кĕр сăри» номи-нацире вĕсем çĕнтерни кĕт-менлĕх пулмарĕ. Кипечкасси-сен куравĕпе Фаинăпа Эль-вира Смирновăсем паллаш-тарчĕç. Михаил Смирновпа Вениамин Павлов пулă яш-ки пĕçерчĕç. Кайри Ункăпу-çĕнчи Мария Изванова пич-кине пуçласа хăй вĕретнĕ сă-рапа хăнасене сăйларĕ. Кăм-па яшкипе шампиньон шаш-лăкне Светлана Гайкова пĕ-çернĕ. Сĕтел хушшинчи ку-пăста – «мулкачă» пурне те уяв саламĕ ярать. Хастарсем «Купăстаран мулкач» номи-нацине тивĕçрĕç.

Хыркассисем уяв сĕтелне лаша урапи çине вырнаç-тарнипе «Кĕр сăри урапи» номинацире палăрчĕç. Ка-кай шӳрпине Светлана Се-менова пĕçерчĕ. Шупашкар-кассисем юрă-ташăпа палăр-са «Юрăпа кĕтсе илчĕç» ята тивĕçрĕç. Шупашкаркасси ял старости Роза Бычкова уя-ва хăйĕн янаварĕсемпе хут-шăнчĕ, лаша кӳлнĕ урапапа ярăнтарчĕ. Станъял ялĕнчи какай шӳрпине ял старости Николай Артемьев пĕçерчĕ, Татьяна Майоровăпа пĕр-ле юрăпа кĕтсе илчĕç. Тĕр-лĕ курăкран вĕретнĕ «Вĕри çырла шывĕ» чей чирлесен сиплĕ. Станъялсем «Сиплĕ сĕткен» номинацире палăр-чĕç. Çӳлтикассинчи Алевти-на Мартьянова тăрăшнипе уяв сĕтелĕ туллиехчĕ. Мал-ти Ункăпуçĕнчи Клавдия Яр-духина, Спиридоновсемпе Рязановсем, Мочаловсем те тĕрлĕ сăра вĕретнĕ. Чăваш апат-çимĕçне хатĕрлессипе жюри Атăлъялсен пӳремечĕ-пе Салапайкассисен «Сал-так пăттине», Кайри Ункă-пуçсен кăмпа кукăльне тата Вăрманкассисен «Кĕр сăри-сене» палăртрĕ. Çĕнтерӳçĕ-сене тĕрлĕ парнепе чысла-рĕç. Эдуард Бахмисов Вла-димир Мартьянова чăваш-лăха аталантарнăшăн ЧНК Хисеп хучĕпе чысларĕ. ЧР таврапĕлӳçĕсен ертӳçи Сер-гей Сорокин вара Владимир Мартьяновăн кăкăрĕ çине Никита Бичурин ячĕллĕ ме-дале çакрĕ, ĕнентерӳ хутне пачĕ. Чăн та, халăхпа пĕр-ле ĕçлеме те, уявра савăн-ма та аван çав, сăлтавĕ пул-тăр кăна.

НИКОЛАЙ СМИРНОВ,
АТĂЛЪЯЛ

УТЕПЛЕНИЕ ДОМОВ
пустотелых стен, полов, чердаков и мансард
ПЕНОИЗОЛОМ И ЭКОВАТОЙ
Тел.: 8-919-669-16-66
08-47

Саламлатпăр

Шупашкарта пурăнакан **Николай Михайловичпа Надежда Анатольевна ИВАНОВСЕНЕ** октябрĕн 10-мĕшĕнче шăкăл-шăкăл калаçса пурăннăранпа 30 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Малашне те сирĕн çемйĕр çийĕн юратупа телей кайăкĕ вĕçсе çӳретĕр. Ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

■ *Хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, хăтипе тăхлачи, тăванĕсем.*

10-01

• СЫВĂ ПУРНĂÇ

Октябрĕн 1-мĕшĕнче Чăваш Республики Пĕтĕм Раççейри çуран утмалли куна хутшăнчĕ.

Вырсарникун сывă пурнăç йĕркине кăмăллакан 2300 яхăн çын Шупашкарти Хĕрлĕ лапамра пухăнчĕ, унтанах пурте хăвăрт утассипе массăллă старта тухрĕç. Спорт марафонĕ республика Правительствин членĕсене, федерацин тата муниципалитетăн влаç органĕсен ертӳçисене, паллă спортсменсене, ĕç коллективĕсене, шкул ачисене, студентсене пĕр тĕллевпе пĕрлештерчĕ.

Кӳкеçри «Улăп» ФОК çумĕнче йĕркеленĕ çăмăл атлетикăна кăмăллакан клуб членĕсем сентябрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 1-мĕшĕччен Адлерта ветерансен хушшинче (35 çултан аслăраххисем) çăмăл атлетика чупăвĕпе Раççей чемпионатне хутшăнчĕç. «Юность» спорт комплексĕн стадионĕнче çĕршыври 68 регионти 130 хуларан 500 ытла спортсмен ăмăртнă. Вĕсен хушшинче – чупма юратакансен 51 клубăн членĕсем, халăхсен хушшинчи класлă 14 мастер, РФ тава тивĕçлĕ 4 спорт мастерĕ.

Шупашкар район командинче 10 çын пулнă. Роза Васильева 60-64 çултисен хушшинче 1500 м чупса Раççей чемпионĕн ятне çĕнсе илнĕ, 800 м дистанция вара виççĕмĕш вĕçлерĕ. Маргарита Алексеева (Çĕнĕ Тренккасси) 50-54 çултисен хушшинче 10 çухрăм чупса финиша 1-мĕш вĕçленĕ, 5 çухрăма чупса «кĕмĕллĕ» пулчĕ. Çăмăл атлетикăпа иртекен çуллахи чемпионатра Александр Орешников та пĕрремĕш хут хутшăнчĕ. 50-54 çултисен хушшинче 5 тата 10 км хăвăрт утса пьедесталăн 3-мĕш картлашки çине тăма тивĕçрĕ. Людмила Федорова (Çĕнĕ Тутаркасси) 60-64 çулти хĕрарăмсен хушшинче пилĕкборьере, молот ывăтассинче 1-мĕш вырăн йышăнчĕ. Петр Федоров (Кӳкеç поселокĕ) 5 тата 10 çухрăмсене пуринчен хăвăртрах утса тухрĕ. Шупашкар район спортсменĕсем федерации шайĕнче пĕрремĕш хут тăватă 1-мĕш вырăна йышăнма тивĕç пулчĕç.

Раççей чемпионатĕнче Шупашкар район спортсменĕсем Чăваш Ен команди шутĕнче 60-64 çултисен хушшинче эстафетăра ăмăртрĕç. Пĕрремĕш тапхăрта Муза Семенова чупрĕ, иккĕмĕшĕнче – Маргарита Алексеева, виççĕмĕшĕнче – Людмила Михуткина, тăваттăмăшĕнче – Роза Васильева. Вĕсем пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕç.

• 2017 ÇУЛ – РАÇÇЕЙРЕ ЭКОЛОГИ ÇУЛТАЛĂКĔ

«Вăрман, пурăн!»

2017 çула РФ Президенчĕн Владимир Путинăн хушăвĕпе Экологи çулталăкĕ тесе йышăннă. Федерацин вăрман хуçалăхĕн агентстви вăрман лартса ĕрчетессипе ун шайĕнче пысăк мероприятисем ирттерет. Çĕршыв территорийĕнче çавăнпа та вăрман культурисен сезонĕнче йывăçлă 945 пин га лаптăк хушăнма пултарасса кĕтеççĕ.

«Пĕтĕм Раççейри вăрман лартмалли кун» акци ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать. 2010 çултанпа унта 12,8 млн çын хутшăннă, 212 млн йывăç лартнă. Кăçалхи августăн 11-мĕшĕнче РФ çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕн çумĕ, Федерацин вăрман хуçалăхĕн агентствин ертӳçи Иван Валентик пĕтĕм çĕршыври «Вăрман, пурăн!» акцие старт панă. Ăна улттăмĕш çул ирттереççĕ. Пĕлтĕр акци шайĕнче 25 млн йывăç лартнă, вăрманти йывăçсен вăррисене 25 тонна хатĕрленĕ. Акци çынсене вăрман пуянлăхне упраса хăварассипе, çак тытăмра вăй хуракансен пĕлтерĕшне ӳстерессипе сыхăннă ыйтусем çине çаврăнса пăхма хистет.

Акципе килĕшӳллĕн вăрман фончĕн çĕрĕсем, ял-салара йывăçсем лартаççĕ, вăрмансене çӳп-çапран тасатаççĕ, ăна сыхласа хăварассипе занятисем, лекцисем тата куравсем иртеççĕ. Карачура лесничествинче çуркуннех 5-6 га вăрман лартса хăварнă. Вăрман маçтăрĕ Дмитрий Плешков йывăç культурисене ӳсме чăрмантаракан курăка, хăйсен тĕллĕн шăтса тухнă йывăç-тĕме çулса илни çинчен калать. Вăрмана çӳп-çапран тасатасси те лесничествăра тăтăшах ирттерекен ĕçсен шутне кĕрет.

Чăваш Республикинче «Вăрман, пурăн!» акци сентябрь уйăхĕн вĕçĕнчен пуçласа октябрьччен иртет. Çут çанталăк пуянлăхне упраса хăварас ĕçре «Таван Ен» хаçат редакцийĕ те хăйĕн тӳпине хыврĕ. Сентябрĕн 26-мĕшĕнче Чăваш Республикин Çут çанталăк министерствин Шупашкар район территорине кĕрекен Çурçĕр участокĕн лесничествинче 850 хыр лартса хăварчĕ. Акцие коллектив хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухнăранпа 85 çитнине халалларĕ.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

Акцие «Ягодка» ача сачĕ те хутшăнчĕ

СĂМАХ МАЙ

ЧР çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин вăрманпа усă курас тата лартса çĕнетес енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Николай Судаков пĕлтернĕ тăрăх, «Вăрман, пурăн!» акцин тепĕр тапхăрĕ Атăл леш енче октябрĕн 7-мĕшĕнче иртет.

www.meteorf.ru сайт пĕлтернĕ тăрăх

ÇАНТАЛĂК

Эрнекун ...Октябрь 6	+10°	+6°
Шăматкун ...Октябрь, 7	+12 °	+8°
Вырсарникун ...Октябрь, 8	+11 °	+6°

Октябрь	9	Тунтикун.....	+12°
Октябрь	10	Ытларикун	+11°
Октябрь	11	Юнкун	+10°
Октябрь	12	Кĕçнерникун.....	+8°

валюта курсĕ 06.10.2017
$ 57,58
€ 67,78